Инв. № 144 3049
А 23
22701

Леонид Агаков



# Манан тусем

Чăвашгосиздат - 1941

ПРОВЕРЕНО
22701

ЧИТАЛЬНЯ

ЛЕОНИД АГАКОВ

А 23

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
8 августа 941 г.
Степанова
рег. № 145

# МАНАН ТУССЕМ

КАЛАВСЕМ

9/х

Чувашская Центр. Библиотека
№ 22401
обяз. экз.

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР – 1941

ПРОВЕРЕНО
20 07

# ТАНКИСТ КАЛАВĔ

...Героев вновь страна моя
Венчает славой чистой.
Пускай узнают все края
О доблестных танкистах!

*Н. Тихонов.*

...Ку калава эпĕ иртнĕ çулла Карельский перешеекра, Чикме тăрăхĕнчи пĕр чăваш ачинчен илтрĕм. Вăл акă мĕнле пулчĕ.

Пĕр ирхине эпир, темиçе красноармеец, политрукпа калаçса татăлтăмăр та, С. шывĕ хĕррине хĕвел ăшшинче «пиçме» кайса выртрăмăр. Канмалли кунччĕ. Çанталăк лайăх, тӳпе кантăк пек тап-таса, хĕвел хĕртет. Унччен темиçе кун пĕрмай çумăр çунăран пулас, йывăçсем уйрăмăнах ешĕл пек, сĕткенлĕрех пек курăнаççĕ. Янкăр уçă тӳпере, çунатсене саркаласа, тăрисем юрлаççĕ. Çав хушăрах самолет моторĕсем кĕрлени илтĕнсе кайрĕ, таçта инçетре, анат енче, çырла пухса çӳрекен хĕрсем юрласа ячĕç...

С. — пысăк шыв мар; вăл ĕмĕрхи вата йывăç тымарĕсемпе çав тери пысăк гранитлă чулсем хушшипе пит теваскавлăн юхса выртать, хăйĕн юххипе Кавказри чарусăр юханшывсене аса илтерет.

...Хĕвел майĕпе çӳлтен çӳле хăпарса пычĕ,

сывлӑш вӗриленнӗҫемӗн вӗриленчӗ, хӑшпӗр юлташсем ҫывӑхри йывӑҫсен сулхӑнне кусса ларчӗҫ, хӑшӗсем шыва кӗме пуҫларӗҫ. Ҫав вӑхӑтра С. леш енчи ҫӳҫе тӗмисем хушшинчен пӗр вӑтам пӳллӗ, хурарах сӑнлӑ кӗҫӗн командир-танкист тухрӗ. Унӑн кӑкри ҫинче Хӗрлӗ Ялав орденӗпе йӑлтӑркка медаль ҫиҫсе илчӗҫ... Вӑл пире аллипе сулса саламларӗ те салтӑнма тытӑнчӗ. Кӗҫех вӑл кӑкӑр таран шыва кӗрсе тӑчӗ, пуҫне ҫурӗ, унтан пӗчӗк ача пек чӑмпӑлтатма тытӑнчӗ: чӑмрӗ, ишрӗ, каллех чӑмрӗ. Пуҫне шывран кӑларса тулли кӑкӑрпа сывласа илчӗ:

— Ух, лайӑх! Ух, аван та-ҫке!..

Шывран тухсан, танкист пирӗн пата, хӗвел ӑшшине, кавир пек ҫемҫе курӑк ҫине пырса выртрӗ.

— Шыв питӗ ӑшӑ паян, — терӗ вӑл, йӗпе ҫӳҫне сӑтӑркаласа.—Атӑлта кӗнӗ пекех туйӑнчӗ. Шел — ишме вырӑн сахал...

— Эс Атӑл тӑрӑхӗнче пурӑннӑ-и-мӗн? — ыйтрӗ пирӗн боецсенчен пӗри, орденоносец ҫинчен пасӑрхи пекех куҫ илмесӗр пӑхса.

— Тӑрӑхӗнче мар, Атӑлӗ ҫинчех пурӑннӑ, — ответ пачӗ ку. — Атӑл ҫинче ҫуралнӑ, ҫавӑнтах ӳснӗ...

— Ӑҫтисем вара эс? — интереслентӗм эпӗ.

— Чӑваш республикинчен.

— Ну-у? Чӑваш-и?

— Чӑваш. Эс те-и?

— Эпӗ те...

Калаҫу тӑруках ӑнса кайрӗ. Пӗр-пӗринчен ҫара киличчен хӑш районра пурӑннине, ӑҫта ӗҫленине

ыйтса пĕлтĕмĕр. Çарта вăл виççĕмĕш çул служит тăвать иккен, ку шутран икĕ çула яхăн Монголи Халăх Республикинче пурăннă, Ленинград енне пĕлтĕр кĕркунне çеç килнĕ. Кунта вăл пĕрре кăна мар белофинсене хирĕç пыракан çапăçусенче пулнă. Призыва кĕриччен Михаил Петров (танкистăн ячĕ çапла-мĕн) тракторист та, шофер та пулса курнă-мĕн. Çара илсен вара кĕске вăхăтрах танкистсен чаçĕнче механик-водитель ятне илнĕ.

Эпир унпа чăвашла калаçрăмăр. Манăн юлташсем чăвашла пĕлместчĕç, çавăнпа та вĕсем ман çине — эпир калаçнине ăнланман пирки ĕнтĕ— кăмăлсăртараххăн пăха-пăха илчĕç.

«Мĕн-ха эсĕ пĕччен кăна ыйтса пĕлетĕн, пирĕн те пĕлес килмест-им»... тени уççăнах палăрчĕ вĕсен куçĕсенче. Çакна кура, эпир вырăсла калаçма пуçларăмăр. Юлташсене, чăнах та, çак çеç кирлĕ-мĕн, — вĕсем пĕр самантрах пирĕн çуммарах ларса итлеме хатĕрленчĕç. Танкист пĕр пуçланă халапне малалла тăсрĕ. Эпир шăппăн кăна ларса итлерĕмĕр ăна...

— Орденне мана пĕлтĕр Халхин-Голшăн пачĕç, медальне — кăçал, Финляндишĕн. Пĕр-ик эрне кăна иртрĕ-ха медальне илсе килнĕренпе. Мускавра пултăм...

Вăл Михаил Иванович Калинин аллинчен çак пысăк наградăна илни çинчен каласа пĕтерсенех —Халхин-Гол патĕнчи çапăçусем çинчен каласа пачĕ. Эпĕ унăн калавне пĕр улăштармасăрах, хăй

каланă пекех каласа паратăп, ма тесессĕн унăн калавĕнче хушмалли те, улăштармалли те çук...

* * *

—Пĕлтĕр çулла Монголипе Манчжури чиккинче, Халхин-Гол шывĕ таврашĕнче, мĕн-мĕн пулса иртнине илтнĕ ĕнтĕ эсир,—терĕ вăл.

— Илтнĕ пăртак, хаçатсенче вуланă,—терĕмĕр эпир.

— Хаçатсенче нумаях çырмарĕç ун çинчен, анчах та унта пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтермелли ĕçсем пулса иртрĕç...

Танкист пире пăхса çавăрăнчĕ те, тарăнăн сывласа илчĕ. Ку ĕнтĕ — унăн аса-илÿсем питĕ те нумаййине, хăшне малтан каласа парам-ши, тесе шутланине пĕлтерчĕ.

— Эп хам пĕр çапăçăва питĕ лайăх астăватăп. Ăна пирĕн ачасем кайран «Баин-Цаганское побоище» тесе ят пачĕç,—вăл Халхин-Гол шывĕ хĕрринчи Баин-Цаган тăвĕсем патĕнче пулчĕ, июль пуçламăшĕнче...

Японин Камацубара ятлă каппайчăк генералĕ пĕр каçхине, пăч тĕттĕм пулнипе усă курса, Халхин-Гол шывĕн сулахай енне темиçе пехотный полк, нумай утлă çар, темĕн чухлĕ артиллери, пулеметсем, тем те пĕр сĕтĕрсе каçарнă. Хăйĕн çарĕсемпе вăл Баин-Цаган тăвĕсем çине хăпарса вырнаçма ĕмĕтленнĕ, мĕншĕн тесен çав çÿллĕ тусем çинчен тавралăх таçта çитиех курăнса выртать. Камацубара çаванта хăйне валли никам çĕнеймен крепость тăвасшăн пулнă-мĕн. Анчах та ĕçсем урăхла пулса тухрĕç...

Тăшмансем Баин-Цаган çине чакаланма тытăнни синчен разведчиксем пырса пĕлтерсенех, пирĕн командовани вĕсем мĕне ĕмĕтленнине хăвăрт тавçăрса илет те тӳрех приказ парать:

— Тăшмана Баин-Цаган çине улăхма памалла мар, çавăнтах çапса аркатмалла!..

Питĕ хăвăрт хатĕрленсе çитрĕмĕр эпир...

Танксем, броневиксем, кавалеристсем, пехота—кашни хăй вырăнĕнче, пĕр самантрах тапранса кайма хатĕр тăчĕç, пурте тăшман çине часрах сиксе ларса, ăна часрах çĕрпе танлаштарас кăмăлпа çунчĕç... Боецсем командирсенчен тек-текех ыйтса пĕлме тăрăшрĕç:

— Хăçан пуçланать? Час-и?

Командирсем хăйсем те кĕтеççĕ ĕнтĕ, кашни минутрах сехечĕсем çине пăха-пăха илеççĕ...

— Çук-ха. Ан васкăр... Пуçланать акă!

Чăнах та, нумаях кĕтсе тăмалла пулмарĕ — пуçланчĕ.

Малтан пĕр тупă ухлатрĕ... Унтан тата, тата, тата...

Ой-ой, вĕри мунча пуçланчĕ вара самурайсене валли!

Ирхи кăвакрах тĕтре витĕр никам улăхайми улăпла хӳме пек курăнакан тĕксĕм Баин-Цаган тăвĕсем еннелле пĕр харăс çĕршер-çĕршер йывăр снарядсем шăхăрса чăмма тытăнчĕç, тавралăх таттисĕр ĕрлеме, ухлатма, кисренсе чĕтренме тапратрĕ. Снарядсем çав тери кĕрслетсе-шартлатса çурăлчĕç, тӗмĕн çӳллĕш çулăм капанĕсем — çĕрпе, чулпа, хăрăмпа пĕрле пĕлĕтелле çĕкленчĕç.

Кĕçех çак хăрушла шава пирĕн эскадрильесен моторĕсем ĕрлени хутшăнчĕ. Пирĕн пуçсем çийĕпе —пĕрин хыççăн тепри — йывăр бомбардировщиксен отрячĕсем иртсе кайрĕç. Вĕсем хăйсен «кученеçĕсене» самурайсем çине пăрахма тапратсан, пĕр вăхăт Баин-Цаган çине тĕнчере нихăçан пулман смерч пырса тухнăн туйăнса кайрĕ, пĕлĕтпе çĕр хутшăнса кайнă тейĕн... Ну ĕнтĕ, çав тери хăватлă пулчĕ бомбардировка! Ун пеккине эп хам та курманччĕ çав кунччен...

Хайхи, черет пире те çитрĕ.

Пирĕн танксем тăрăхларах лапамра, сайра кăна ӳсекен хуçкаланчăк йывăçсем хушшинче тăратчĕç. Пĕтĕмпех хатĕр ĕнтĕ, машинисене кашниэх вуншар хут тĕрĕсленĕ, сăнаса пăхнă. Стартерсене çавăрмалла та — газ памалла çеç, кайрĕ вара пурнăç...

Кĕç — приказ:

— Танксемпе юханшыв леш енне каçмалла та —тăшмансене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкмалла!

Командир команда парсанах, машинăсем пĕр харăс, моторĕсене пĕр алăпа заводить тунă пек хусканса кайрĕç, фронта тăрăх саланса малалла ыткăнса тухрĕç. Пĕр икçĕр метр кайсанах, телефон трубкинче эп хам танк командирĕн сассине илтрĕм.

— Ан васка, Миша,—терĕ вăл. Çавăнтах пуç тăрринче тупă кĕрслетнине, унтан пулеметран темиçе кĕске черет кăларса янине сисрĕм. Унтан каллех командир сасси илтĕнчĕ:

— Пăртак хăвăртлат, сăрт пулать...

Танк пĕрре пуçĕпе çӳлелле çĕкленчĕ, унтан аялалла тăрăнчĕ, унтан каллех çĕкленсе, лăканса чăмса илчĕ. Пăхмалли ансăр шăтăк витĕр эп Баин-Цаган хыçĕнчен хĕвел тухса хăпарма пуçланине, унта та кунта, снарядсем çурăлнă çĕрте, сарăрах тĕслĕ çулăмпа хăйăрлă чул фонтанĕсем сике-сике хăпарнине куртăм. Машина ăшĕнче вĕриленме пуçларĕ, сывлăш йывăрланчĕ, анчах механизмсем питĕ лайăх ĕçлерĕç: «сехет пек», теççĕ çавнашкал чух танкистсем.

— Полный, Миша! —сасартăк хыттăн кăшкăрчĕ командир; çавăн хыççăнах танк малалла ыткănса, темскерле çемçе çĕре тухрĕ. Пăхмалли шăтăк витĕр хамăн пит çине шыв тумламĕсем сирпĕннине кура, эпир шыв урлă каçма тапратнине ăнлантăм. Часрах полный газ патăм, машина тăрук пĕтĕм кĕлеткипе малалла сиксе илчĕ, унтан — вăхăт нумай та иртмерĕ — тăвалла хăпарма пуçларăмăр.

— Маттур!—терĕ командир телефонпа.

Ку ĕнтĕ эпир çырана чиперех тухнине пĕлтерчĕ.

Шăтăк витĕр хамăртан малта йĕплĕ пралук картисем курăнчĕç.

«Вĕсем хыçĕнче пире валли мĕн те пулин хатĕрленĕ пуль-ха...» шухăшласа илтĕм эп, машина тӳрех пралук çинелле тытса.

— Мĕн куратăн?—кăшкăртăм телефон тăрăх командира.

— Йĕплĕ пралук виçĕ рет,—кăшкăрчĕ вăл мана хирĕç. Ун хыçĕнче — окопсем... Противотанковый

орудисемпе пулеметсенчен переççĕ... Вĕсене ответ паратăп!

Пĕр виç-тăватă минут хушши шарламарĕ вăл кун хыççăн. Темиçе снаряд кăларса ячĕ пулас, унтан пулеметран çунтарма тапратрĕ. Мана ку кăшт çеç, килти пек каласан, таçта çӳлте крыша çине çумăр çунă пек кăна илтĕнчĕ. Ман машина çӳлелле сиксе, пĕрре пĕр еннелле, тепре тепĕр еннелле сулкаланса илчĕ.

— Окоп урлă каçрăмăр!—кăшкăрчĕ командир.— Сылтăмалла тыт! Газ!

Эп ĕнтĕ нимĕн те курмарăм, танк умĕнче хупхура тусан çеç капланса тăчĕ. Танка вырăнтах сылтăм гусеница çинче пăртăм та газ хушрăм. Çав тери хытă лăканма пуçларăмăр...

Вăхăтран-вăхăта командир уйрăм сăмахсем кăшкăрса çеç пычĕ.

— Танксем пурте окопсем урлă каçнă! Пирĕн хыçра пехота! Командирский танкран сигнал параççĕ — сылтăмаллах, окопсем тăрăх! Тăваттăмĕш пулемета лапчăтрăмăр, Миша!.. Вĕсен пехоти пăрçа пек саланать! Жми, давай!

Пĕр пулемет «йăви» хыççăн теприне таптаса, орудипе пулеметран пĕрмай вилĕм сапса — чи пысăк хăвăртлăхпа малалла ыткăнса пытăмăр. Ĕнтĕ, командир хушнипе эпĕ машинăна сулахаялла пăрса — Баин-Цаган патнелле тӳп-тӳрĕ тытрăм. Тăшман батарейĕсем урнă пек переççĕ, снарядсем пирĕн çумранах шăхăра-шăхăра иртеççĕ, анчах та, пирĕн телее, машинăна лектерейменççĕ. Пулеметсем çинчен каламастăп та, пульă-

сем пирĕн танк ҫине ывăҫласа сапнă пек тăкăнаҫҫĕ.

...Сасартăк, хамăр умри тикĕс вырăнта, пире хирĕҫ тĕлленĕ виҫĕ противотанковый орудие курах кайрăм, самантран — батарея умĕнче сарлака та тарăн канава асăрхарăм. Чăннипех калăтăп: чĕре темле пăчăртанса, ҫӳҫенсе илчĕ... Противотанковый ров! Ҫăвар ăшчикки тӳрех типсе ларчĕ... Ҫавăнтах (тĕлĕнсе каймалла!..) пĕр факт аса килчĕ. Чита хулинче тăнă чух эпĕ пĕр хĕрпе туслашнăччĕ. Сăмах майĕн каласан — пит лайăх хĕр, Таня ятлăскер, медтехникумра вĕренетчĕ. Ҫырусем халь те килкелеҫҫĕ-ха унран. Пĕрре, хула садĕнче ҫӳренĕ чух, темрен сăмах танксем ҫырмасем урлă сикни ҫинчен пуҫланса кайрĕ.

— Эс ху сикнĕ-и? —тесе ыйтрĕ ҫав манран.

— А мĕн... сикесси вăл — нимĕн те мар! — терĕм эп ăна, мухтанарах. Кайран хама та аван мар пулчĕ савнă хĕре суйнăшăн. Вара ҫав халь ҫакăнта, чи ответлă та хăрушă самантра, темле, куҫ умĕнче ҫиҫĕм йăлтлатса илнĕ пек аса килчĕ...

«Нимĕн те мар!..» Виҫҫĕмĕш хăвăртлăхпа ыткăнса пырса вунă тонна ытла туртакан тимĕр купине виҫ-тăват метр тарăнĕш шăтăка сиктерха! Паллах, бензин бакĕсем ҫурăлма, командирпа иксĕмĕр те ҫавăнтах ҫунса кайма пултаратпăр...

Кайран калană тăрăх — ман командир та ҫав ловушкăна асăрханă пулнă, ҫапах та каялла чакма е пăрăнма юраман ĕнтĕ, — тăшман батарейĕсем пире пĕтерсе хума пултарнă.

« Ну, пулчĕ япала... Ҫĕр ҫинчи пур механика

законĕсем тăрăх та — вилĕм çитрĕ» — тесе шутларăм, тет вăл. Хăй çав вăхăтрах мана телефонпа:

— Держись, Миша!—тесе кăшкăрчĕ. Ман пуç çинче малтанхи пекех пулемет шатăртатрĕ.

Эпĕ педальсем çине пусса газ хушрăм...

Машина çак вăхăтра вилĕм кӳрекен снарядсен хăвăртлăхĕпе ăмăртнă пекех туйăнчĕ. Вăл вĕриленсе çитнĕ урхамах кайри урисем çине тăнă евĕрех çĕкленчĕ... Калама та çук ĕрлесе, ӳлесе ячĕ... Унтан сасартăк çак хăрушла шав татăлчĕ, самолет çĕртен уйăрлса вĕçме тытăннă чухнехи пек пулчĕ... Танк канав урлă вăркăнса каçса, гусеницăсемпе çĕр çине çапăнчĕ те, нумай пулмасть кӳпаланă тăпра купине ишĕлтерсе, батарея çинелле ыткăнчĕ... Самантран вăл темĕн çине пырса тăрăнчĕ, чалăшрĕ, унăн айĕнче темĕн чăнкăртатса ишĕлчĕ... Анчах çав вăхăтрах танк пит те вăйлăн чĕтренсе илчĕ, эпĕ пуçпа, пĕтĕм кĕлеткепе стена çумне çапантăм. Мотор темиçе хутчен лăкăртатрĕ те — унтан шăп пулчĕ. Танк чарăнчĕ. Пăхмалли шăтăкран тĕтĕм кĕрсе кайрĕ... Хамăра мĕн пулнине лайăххăн тавçăрса иличчен —тепĕр снаряд башньăна пырса çапрĕ. Хулпуççипе тĕртсе пăхрăм — башня çаврăнмарĕ, тет командир. Снаряд башньăна савăрмалли механизма лăпчăтса лартнă-мĕн. Ĕнтĕ эпир тăшмана хирĕç пеме те пултарайман...

Кун хыççăн мĕн пулнине эп пĕлсех çитейместĕп,—стена çумне хыта çапăннипе ăнран кайнă. Чылай вăхăт иртнĕ пулмалла. Эпир шăплансанах,

йнҫетре те мар, тăшмансем кăшкăрни илтĕнчĕ, тет командир. Вĕсем ĕнтĕ танк патнелле чупнă. Командир вĕсене хирĕҫ перес тесе револьверне туртса кăларнă-мĕн, анчах — эп ăнран кайнине асăрхаса — башньăран ман пата аннă. Эп тăна кĕнĕ чух — вăл ман пуҫа йĕпе бинтпа ҫыхса, чĕркуҫленсе тăратчĕ.

— Нимех те ҫук, шăйăрăлнă ҫеҫ,—терĕ вăл.

Эп халь ҫеҫ мĕн пулнине ăнланса илтĕм.

— Епле-ха вут тĕртсе ҫунтарман вĕсем пире?— ыйтрăм командиртан, сăрлатса ыратакан пуҫа хыпашласа.

— Килчĕҫ вĕсем, шаккарĕҫ, орудие пăрма тăчĕҫ, пулемета тыткаласа пăхрĕҫ... Трофей илтĕмĕр, терĕҫ пулмалла. Малти люк хĕсĕнсе ларнă — уҫăлмасть, ҫӳлти люк патне пыма шикленчĕҫ курăнать,—пăхмалли шăтăк пур-ҫке...

— Трофей пулмасть, пит йывăр килсен машинăна сывлăша сиктерсе яратпăр,—терĕм эп, пуҫ ҫавăраннипе кĕрешсе. Командир мана хăтăрса тăкрĕ:

— Вăт, ухмахла калаҫатăн та ҫав! Сывлăшра сиксе ҫурăлма кирек хăҫан та ĕлкĕрĕпĕр... Хамăра та, машина та ҫăласси ҫинчен шухăшлас пулать, тусăм!

Ку мана пулма пултарайман япала пек туйăнчĕ. Ирĕксĕрех темле йӳҫҫĕн кулса илтĕм. Анчах та, кулма юрамасть иккен... Пуҫ йĕппе тирнĕ пек ыратса кайрĕ. Ăш пăтранса килнине сиссе, хăвăртрах пăхмалли шăтăк патне пырса сывлама пуҫларăм. Ҫапах та — усси пулмарĕ, тулти сыв-

лӑш пӗтӗмпех тар тӗтӗмӗпе, газ шӑршипе тулнӑмӗн. Ӗнтӗ вӑй пӗтсе ҫите пуҫларӗ... Темшӗн, каллех Таня аса килчӗ... Ун чухне, Читари хула садӗнче, калӑхах танкпа сикрӗм тесе суйрӑм эп ӑна... анчах та халь... Халь сикрӗм вӗт, чӑннипех сикрӗм... Танк чарӑнса ларнӑшӑн эп айӑплӑ мар, ҫапӑҫура тем те пулма пултарать... Ӑҫта-ши халь вӑл Таня, аса илет-ши вӑл мана?

— Мӗн терӗн ҫак эс? — илтӗнчӗ командир сасси.

Эп аташма тапратса, шухӑшӑмсене саспах калама тытӑннӑ иккен. Командир куна сиссе, флягӑра юлнӑ шывпа ман пуҫа йӗпетме тытӑнчӗ...

— Кампа калаҫрӑн?—ыйтрӗ вӑл каллех.

Эп каласа патӑм. Аван мар, хӗре суйрӑм, терӗм.

— Халь суйни пулмасть ӗнтӗ вӑл — сикрӗн вӗт, — лӑплантарчӗ вӑл мана. — Тӗл пулма тӳр килсен—хамах мухтӑп ак сана. Ҫаплах калӑп: танкпа вӗҫме пӗлет, тейӗп... Чӑн та, тӗлӗнмелле ҫав, шутламанччӗ ку шуйттан шӑтӑкӗ урлӑ каҫасса. Хамӑра уксахлантариччен, пурпӗрех вӗсен батарейне лӑчӑркаса тӑкрӑмӑр вӗт...

— Ытти машинӑсем мӗнле-ши?

— Сулахай флангра пӗри пирӗн пекех чарӑнса ларнӑ курӑнать... Анчах ыттисем — пӗтӗм фронт тӑрӑхах — ҫӗмӗрсе кӗрсе кайрӗҫ!

Тулта тӗттӗмленме пуҫларӗ. Танк ӑшӗнче—пӑч-тӗттӗм. Хӗсӗк шӑтӑк витӗр хӗвеланӑҫ енче темскер пит вӑйлӑн ҫунни курӑнчӗ Ҫывӑхрах тӑшман пулемечӗсем таттисӗр шатартатрӗҫ, ин-

ҫетре тупӑсем ухлатрӗҫ... Ҫапӑҫу хӗрсех пычӗ. Тӑшмансем, пехота атакине кӗтсе пулас, пульӑсене сапрӗҫ ҫеҫ.

Хамӑр калаҫнине илтесрен сыхланнӑ пек, эпир шӑппӑн кӑна калаҫрӑмӑр. Пӗр-икӗ хутчен тӗлӗрсе кайнӑ пек те пултӑм пулмалла, вӑхӑт мӗн чухлӗ иртнине пӗлместӗп, анчах та пӗринче куҫа уҫсан—командир мана: «Вуник сехет, ҫурҫӗр»,—терӗ... Тепӗр кӑштах вӑхӑт иртсен, пирӗн енчен артиллери ҫӗнӗ вӑйпа пеме тытӑнчӗ. Снарядсем пирӗн танкран виҫҫӗр-тӑватҫӗр метр малта ӳксе ҫурӑлчӗҫ, тӑшман пулемечӗсен сассисем сайралантӗҫ, унтан вӑл сассем иҫҫетрен инҫете, Баин-Цаган хыҫнеллех чакса кайрӗҫ. Ӑнлантӑмӑр: тӑшмансем хӑйсен малти линине каялла туртма пуҫларӗҫ...

— Ну, тусӑм, ку тимӗр ещӗкре эпир ӗмӗр ларма пултараймастпӑр, тухас пулать,—терӗ командир.— Выҫҫа та, типсе те вилӗпӗр капла...

— Тухас пулать,—килӗшрӗм эпӗ те. — Нимрен ытла — шыв ӗҫес килет...

Ҫапла калаҫса татӑлтӑмӑр: танкран тухмашкӑн халь чи лайӑх самант... Командир вӑйлӑрах, ҫавӑнпа та вӑл малтан сиксе тухать те, танк патӗнче часовойсем пулсан, вӗсене хӑй хыҫҫӑн чуптарать. Ҫав вӑхӑтра эпӗ японецсене хыҫалтан, тылран пеме тытӑнатӑп.

— Ну, мӗн те пулин... ун пек-кун пек пулсан, асту вара, хӑвна ху комсомолец пек тыткала, — терӗ те юлашкинчен командир, ҫӳле хӑпарчӗ. Вӑл люк пружинӗ ҫине пусрӗ, унтан, сас-хура

пуласран, крышкăна чĕнĕнчен тытса, ерипен уçрĕ. Танк ăшне яранса кĕнĕ уçă сывлăш тем пекех туйăнчĕ çав мана, чĕрене пурнăç вĕрсе кўртрĕ!

— Чипер эппин,—терĕ те командир шăппăн, çĕрелле çемçен кăна сиксе анса, самантлăха танк çумне йăпшăнчĕ. Эпĕ люк крышкине кăшт çеç çĕклесе, ăна сăнама тытăнтăм. Çывăхра шăпахчĕ, командир урисем айĕнче вĕт чул кăштăртатни çеç илтĕнчĕ. Ĕнтĕ эп те сиксе тухас тесеттĕм, анчах люкран пилĕк таран çĕкленсе тухсанах, сасартăк тăшман прожекторĕ сулахай фланґран пирĕн позицисене хыпашлама пуçларĕ, унăн çутти танк башни çине ўкрĕ, аякра пĕшкĕнсе чупакан командир курăнса кайрĕ.

— Тра-та-та-та! — турĕ пулеметран янă черет.

«Пĕтрĕ ку!» — шухăшларăм командир çинчен. Çав самантрах сылтăм енчен тăшмансем çывхарни курăнчĕ. Хăйсен чĕлхипе темскер кăшкăраççĕ... Эпĕ часрах башньă ăшне чăмрăм. Вĕсем çитрĕç те, прикладсемпе шаккама тапратрĕç:

— Уруçки, ставайç!

— Симерть пудит твоя! — тесе кăшкăраççĕ хăйсем.

«Ытла йўне илесшĕн эсир мана» — шухăшларăм хам ăшăмра. Люка ерипен кăшт кăна уçрăм та, маларах тăракан мĕлкесем çине тĕллесе, револьвертан çур обойма кăларса ятăм... Пĕр-иккĕшĕ ахлатрĕç, теприсем темскер кăшкăрашса илчĕç. Анчах сасăсем кăшт аяккарах илтĕнчĕç — танк çывăхĕнчен кайрĕç пулас.

«Ну, тинех хыптарса яраççĕ пуль ĕнтĕ...» — терĕм. — «Мĕн пулать, мĕн килет, пĕтсен—пĕтĕп...»

Çапла шухăшпа люка каллех ерипен кăшт кăна уçса — граната ывăтрăм... Вăл шартлатса çурăлса кайсанах — башньăран пилĕк таран тухса, тата виçĕ граната ывăтрăм. Юлашки граната çурăличчен — револьвера чăмăртаса тытрăм та, çĕре сиксе анса, командир кайнă еннелле чупрăм... Танк патĕнче çулăмпа тусан, хăйăрпа тĕтĕм купи çеç йăсăрланса юлчĕ.

Чылай чупрăм... Тĕмескесем, чулсем, канавсем урлă, çĕрте йăваланса выртакан йĕплĕ пралуксенчен такăнса чупрăм. Вырăнĕ-вырăнĕпе ним йĕркесĕр выртакан тăшман виллисем, ванчăк пулеметсем, пăрахса хăварнă винтовкăсем тĕл пулаççĕ.

Пирĕн артиллери çаплах перет-ха, пулеметсем таклатаççĕ, снарядсем сике-сике çурăлаççĕ, пĕлĕтелле хĕрлĕ, кăвак, сарă ракетăсем шăхăрса хăпараççĕ...

«Командир ăçта-ши, персе ўкермерĕç-ши?» — шухăш çавăрăнчĕ пуçра. Пĕтĕм куç вăйне пухса—таврари тĕттĕмлĕхе сăнама тăрăшрăм, анчах ĕретлĕн нимĕн те курăнмарĕ. Сасартăк Баин-Цаган енчен вăйлă прожектор çутти ўкрĕ — эп ун варрине лекрĕм. Хамран пĕр пилĕк-ултă метрти снаряд воронки ăшне пытанас тесе чупрăм çеç — еулахай енчен тăшмансем пулеметран вăрăм черет кăларса ячĕç. Сылтăм урана икĕ çĕртен питĕ хытă пĕçертсе илчĕ. Ўкрĕм... Прожектор çутти фронт тăрăх сылтăмалла шуса кайрĕ те—

22701



...ДШСКАЯ ПАЛАТА

çухалчĕ. Каллех тĕттĕм... Пĕр минут пек выртсан, суранланнă ура вĕриленнĕçемĕн вĕриленсе пынине туйрăм, юн палкаса юхнипе — аялти йĕм ӳт çумне, пĕçĕ тăршшипех çыпăçма пуçларĕ.

«Çыхас... — терĕм хама хам, — кунта мана никам та хăвăртах килсе пулăшас çук...»

Сурана çыхмалли хатĕрсем манăн противогаз ăшĕнче, танкрах юлнă-мĕн, çавăнпа та аялти кĕпе аркине туртса çуртăм та, юн ăçтан юхнине хыпашласа тупса — çыхма тытăнтăм. Пуç çавăрăнма пуçларĕ, ăшчик çуннипе, тӳсме çук шыв ĕçес килекен пулса кайрĕ...

Çав вăхăтра тĕнчене кисретекен моторсем мĕкĕрсе ĕçлени — тупăсемпе пулеметсен сассине хупласа лартрĕ. Ку — пирĕн самолетсен çĕрлехи атакин пуçламăшĕ пулнă. (Вăл атака мĕн тери хăватлă пулни çинчен кайран пур çĕршывсенчи хаçатсенче те çырнă, тет...) Чĕтренсе тăракан прожектор çуттисем пĕлĕте урлă та пирлĕ хыпашлама тапратрĕç. Ĕнтĕ самолетсем çывхарсах килчĕç; тăшман енче пысăк милĕк евĕр хĕм куписем пĕрхĕнме тытăнчĕç — тăшмансен зениткисем пĕлĕтелле печĕç. Анчах пирĕн бомбардировщиксен иккĕмĕшпе виççĕмĕш отрячĕсем хăйсен «кучченеçĕсене» пăрахсан, хĕрлĕ çунатлă «хурчкасем» японецсен позицийĕсене пулеметсенчен вăйлă çумăр пек сапса иртсен — вĕсен фрончĕ йĕркерен тухса саланса кайнă... Танксемпе пехота çĕнĕрен наступлени пуçласан, тăшмансем хăйсен хĕçпăшалĕсене, снаряд ещĕкĕсене, амуници-

сене, вилнисемпе суранланнисене пӑрахсах, Манчжури еннелле ним йӗркесӗр чакма тытӑннӑ.

...Чи хаяр бомбардировка пуҫлансан, эпӗ пӗр виҫҫӗр метра яхӑн тӗмӗсем хушшипе хамӑр еннелле упалентӗм. Юлашкинчен, вӑй пӗтӗмпех пӗтсе ҫитрӗ... Пӗр хӳтӗрех вырӑн тупса выртма лекрӗ. Ирчченех хускалмарӑм вара... Эп куҫа уҫнӑ чухне тул ҫутӑла пуҫланӑ. Ҫапӑҫу лӑпланнӑ пек: ман умра, инҫетре-инҫетре, хутран-ситрен снарядсем ҫурӑлкалаҫҫӗ, ҫутӑлакан пульӑсем вӗҫе-вӗҫе ӳкеҫҫӗ. Японецсем хӑйсен отступленине витсе пыраҫҫӗ ӗнтӗ.

Темӗнле кукӑр патакран туя пекки туса, тӳсме ҫук ыратакан урана аран сӗтӗрсе, малалла сӗнкӗлтетрӗм. Хӑрушла япаласем куртӑм вара... Тӑшмана ӗмӗр-ӗмӗр асӑнса пурӑнмалӑх «тӑн кӳртнӗ» иккен пирӗннисем!

Фронта тӑршшипех тарӑн, кукӑр-макӑр окопсем масар-шӑтӑкӗсем кӑна пулса юлнӑ. Акӑ — пӗр вырӑнтах ҫавӑрӑннӑ танк гусеницисем ҫӗре тарӑнӑн сухаласа хӑварнӑ. Кунта японецсен противотанковый орудисемпе шултра калибрлӑ пулемечӗсем тӑнӑ, анчах вӗсем халӗ — ҫук, вӗсен вырӑнне ҫӗр ӑшне таптаса кӳртнӗ ванчӑк тимӗр купи ҫеҫ выртать. Аяккарах — пулемет лентисем, снаряд стаканӗсем... Окопсем тӑрӑх пыракан гусеница йӗрӗсем малаллах каяҫҫӗ... Лере — турпас пулнӑ тупӑ ураписем хӑяккӑн выртнӑ, салтак ранецӗсем, сурансене ҫыхмалли хатӗрсем...

Ҫаксене пӑхса пынӑ хушӑрах — сасартӑк такам хама хушаматпа чӗннине илтрӗм:

— Петров! Петров!

— Мишка-а, тусăм!.. — кăшкăрчĕ палланă сас. Сулахайри йывăç тĕмисем хушшинчен виççĕн чупса тухрĕç: пĕри — манăн командир, иккĕшĕ — хамăр чаçри санитарсем. Командир мана ытала-са илчĕ.

— Сывах-çке эс!.. Чĕрĕ!.. — хулпуççинчен тыт-са лăскарĕ вăл мана. — Хăранăччĕ эп... Мĕн те пулин турĕçех пуль, тесеттĕм...

Вĕсем мана носилка çине вырттарчĕç.

— Пирĕн танк мĕнле... Куртăн-и? — ыйтрăм эп командиртан.

— Куртăм. Аптрамасть, сылтăм енчи гусеници татăлнă, тата башни пăсăлнă. Тягачпа сĕтĕрсе тухсан, юсама пулать... Кайран каласа парăп-ха, халь часрах госпитале вĕçтерер!

Манăн каллех пуç çавăрăнма тытăнчĕ, ăш çун-нипе тутасем таткаланма пуçларĕç. Юлташсем шыв ĕçтерчĕç. Флягăсенче пур пек шыва йăлт ĕçсе ятăм, анчах пурпĕрех ĕçес килчĕ. Ура татах та хытăрах ыратма пуçларĕ, юлашкинчен тӳсей-мерĕм:

— Часрах, ачасем, питĕ хĕн... — тесе ятăм.

Юлташсем хăвăрт хускалчĕç. Тепĕр çур сехет-рен хамăрăннисем патне çитрĕмĕр.

Малтан эп хирти госпитальре выртрăм, анчах темиçе кунтан пире Монголирен Совет Союзне илсе кайрĕç... Пулать вĕт-ха телей, — шăп Чита госпитальне лекрĕм. Сывлăх кăшт тӳрленме пуç-ласан — хайхи Таня патне çыру çырса ятăм. Тепĕр куннех вăл ман патăма пырса тухрĕ. Пĕр

чемодан пӑнулми, пирус, конфет ҫӗкленӗ... Тӑван йӑмӑк пекех ӑшӑ кӑмӑлпа калаҫрӗ вӑл, пӗтӗмпех ыйтса пӗлчӗ. Сӑмах майӗн танкпа канав урла сикни. ҫинчен каласа патӑм... Тинех чун лӑпланчӗ,—тек намӑс пулмарӗ ӗнтӗ мана иртнинче суйнӑшӑн.

Ик-виҫ кунта пӗрре пырса каятчӗ Таня. Кашнинчех мӗн те пулин илсе пыратчӗ, юлашкинчен аван мар пула пуҫларӗ мана. Хӑй те пуян марҫке вӑл, стипендипе кӑна пурӑнать...

— Тархасшӑн, ним те кирлӗ мар, тетӗп, — анчах вӑл кулать кӑна.

Пӗринче вӑл, ытти чухнехи пекех, темӗн те пӗр илсе пычӗ. Тек нимӗн те илсе ан кил, пурӗпӗр йышӑнмастӑп, терӗм эп ӑна.

— Сана эп хам йӑлӑхтартӑм пулӗ, тен? Апла пулсан юрӗ — текех килмӗп... — терӗ вӑл кӳреннӗрех сасӑпа.

— Ҫук, ҫук, апла мар,—хам йӑнӑша тӳрлетме тытӑнтӑм эп. — Сансӑр мана питӗ кичем...

Вӑл урӑх нимӗн те чӗнмерӗ, кӑшт ларкаласан, ни ӑшшӑн мар, ни сиввӗн мар алӑ пачӗ те — кайрӗ.

Ҫавӑнтан вара, чӑнах та, пыми пулчӗ. Виҫӗ кун иртрӗ, пиллӗк, унтан — вуннӑ, ман Таня ҫӗр тӗпне путнӑ пекех ҫухалчӗ. Ҫыру ҫырса ятӑм. Ответ пулмарӗ. Пӗтрӗ ман юрату!

Госпитальре выртма пуҫланӑран вара чылай вӑхӑт иртрӗ — уйӑха яхӑн ӗнтӗ, ура тӳрленсех пычӗ. Хаҫатсенчи кӗске сводкӑсем Япони налетчикӗсене пуҫӗпех ҫапса аркатни ҫинчен, вӗсенне

каламă çук нумай хĕçпăшал, çар хатĕрĕсем тытса илни çинчен пĕлтерчĕç... Пĕрле выртакан юлташсенчен нумайăшĕ сывалса çитсе тухса кайрĕç, эпĕ те ĕнтĕ хамăр чаçа таврăнма хатĕрленме пуçларăм.

Сасартăк—савăнмалла япала пулса тăчĕ. Госпитальрен ыран тухас тенĕ чух, кăнтăрлахи апат хыççăн, ман пата пĕр ватă санитарка пычĕ. Питĕ лайăх, кăмăллă карчăкчĕ вăл, суранлисене тăван ачисене пăхнă пек пăхатчĕ. Çав санитарка пычĕ те:

— Ывăлăм, аялта сана темле хĕр кĕтсе ларать, часрах тухма ыйтать, — терĕ.

— Таня! — кăшкăрса ятăм эпĕ савăннипе, вырăн çинчен çӳлтен пăрахнă мечĕк пек сиксе тăрса. Алăк патĕнче тăракан санитаркăна чут çеç тĕртсе ӳкереттĕм:—ай, ма каларăм куна!—тесе çуйăхса çеç юлчĕ вăл.

Тĕлпулу пӳлĕмне çитнĕ çĕре чĕре хăнтлатсах тапма пуçларĕ — çав тери пăлханса кайрăм... Алăка уçрăм. Чӳрече умĕнчи пальмăсем айĕнче Таня ларать... Хĕпĕртенипе, ниçта кайса кĕре пĕлмерĕм пулас çак, тӳрех чупса пырса, ун аллине чăмăртарăм... Чĕлхе çыхланса ларчĕ, нимĕн те калаймастăп, ун çине шăтарасла пăхса, пĕрмай аллине силлетĕп...

— Çитĕ ĕнтĕ, çитĕ...—терĕ вăл юлашкинчен, йăвашшăн кулкаласа.—Эпир сан патна пĕр савăнăçлă хыпар илсе килтĕмĕр.

— Кампа килтĕр? — тĕлĕнтĕм эпĕ. (Мĕншĕн те-

сен Читара ман Танясӑр пуҫне ҫывӑх палланӑ ҫын ҫукчӗ).

— Палламастӑн-и-мӗн?—илтӗнчӗ арҫын сасси.

Эпӗ сылтӑмалла ҫаврӑнса пӑхрӑм. Кама куратӑп? Юнашар пукан ҫинче хамӑн командир лара парать!.. Каларӑм-ҫке, хӗпӗртесе ӳкнипе пулас ҫав, куҫ-пуҫ саланса кайнӑ та манӑн— асӑрхаман ҫавна.

Тӳрех ыталанса чуптурӑмӑр. Таняпа командир мана хӑйсен хушшине лартрӗҫ.

— Ну, герой, пурнӑҫсем мӗнле? — ыйтать командир.

Эп каласа патӑм.

— Пит аван, —терӗ командир. — Ыран тухатӑн эппин...

Вӑл Таня ҫине кӑмӑллӑн пӑхса илчӗ.

— Епле, Таня... Каласа парар-и ҫак каччӑна, е — калар мар-и? Сан шутпа, мӗнле пек?

— Темле-ҫке, — кулса илчӗ Таня.

— Мӗн ҫинчен вӑл? — ним ӑнланмасӑр ыйтрӑм эпӗ.

Ҫав самантрах пуҫра пит те хӑвӑрттӑн тӗрлӗ шухӑшсем ҫуралма тытӑнчӗҫ. Манран сивӗннипе, Таня ман командира килӗштерсе пӑрахман-ши? Чӑнах та, ӑҫтан-ха вӗсем тӗл пулса, ман пата пӗрле килме пултарнӑ?.. Ҫак шухӑшсем чӗрене чӗпӗтмех тапратрӗҫ.

Вӗсем ҫаплах пӗр-пӗрин ҫине пӑхса кула-кула илеҫҫӗ, эп пур — ҫаплах нимӗн те ӑнланаймастӑп-ха... Тепрер минутран — тӳсеймерӗм, ӳссех пыракан иккӗленӳ ыйттарчӗ:

— Эсир пĕр-пĕринпе ăçта тĕл пулнă вара?

Командир кулса ячĕ.

— Кĕвĕçетĕн-и-мĕн?

— Çук, ахаль... интересно.

— Таня адресне эс мана хăвах каланăччĕ-ха вĕт! Сан патна килес тесе, юриех шыраса тупрăм.

Ку сăмахсем хыççăн эп хама хам ӳпкелешсе илтĕм. Аван мар пек туйăнса кайрĕ мана Таняпа командир пирки иккĕленни. Командир ырă сунса килнине, çитменнине Таняна та хăйпе пĕрлех илсе пынине тин чухласа илнĕшĕн те ӳпкелешрĕм хама.

— Спасибо куншăн, савăнтартăр... — терĕм эпĕ, кăмăл çемçелсе килнипе.

Командир полевой сумкинчен икĕ хаçат кăларчĕ. Асăрхарăм— пĕри хамăр фронтри хаçат, тепри — «Известия».

— Ак çаксене паллатăн-и? — ыйтрĕ вăл манран, фронтри хаçатăн малти страници çине пичетленĕ сăнсем çине кăтартса.

Эпĕ тинкерсех пăхрăм. Пурте палланă сăнсем! Пурте хамăр боецсемпе командирсем... Йĕркипе пăхса пынă май хам командирăн сăнне курах кайрăм. Хаçат страници çинчен вăл ман çине кăмăллăн пăхса, кулса ларать. Пĕр-ик çын урлă— ман сăн! Çӳлерехре шултра саспаллисемпе — «Наши бесстрашные герои» тесе çырнă... Пит-куç вут пек пĕçерсе кайрĕ.

— Ну, мĕн тейĕн, тусăм?—ыйтрĕ командир.

— М-ĕн калас...—терĕм эпĕ.

Чăнах та, ним калама та пĕлмерĕм çав унчух.

— Ку пӗтӗмпех мар-ха, тата пур... — терӗ Таня, командир аллинчен «Известия» хаҫата илсе.—Кур...

Правительство награда панӑ спискинчи аялтан хӗрлӗпе туртнӑ икӗ хушамата вулаттарчӗ вӑл.

— Симуков, Александр Павлович... (ман командир!..)

— Петров, Михаил Васильевич... (эпӗ!..)

Таня пӳрни хаҫат тӑрӑх шӑвӑнса ҫӳлелле куҫрӗ...

«Орденом Красного Знамени»...

Ҫав самантра хампа мӗн пулнине пӗлместӗп, сасартӑк пит тепӗр хут пӗҫерсе кайнине, унтан командира чуптунине ҫеҫ астӑватӑп. Таня та мана ыталаса ҫамкаран чуптурӗ. Ку ӗнтӗ вӑл ман ҫине кӑмӑлсӑр пулни иртсе кайнине пӗлтерчӗ...

Госпитальрен тухсан тепӗр кунне— вӑл кун Танян шӑпах канмалли кунччӗ — эпир виҫҫӗмӗр кунӗпех хула тӑрӑх ҫӳрерӗмӗр, каҫхине опера театрӗнче «Броненосец Потемкин» итлерӗмӗр, кайран кафере чылай лартӑмӑр, унтан Таняна ӑсатса ятӑмӑр. Уйӑрӑлнӑ чух, Таня мана аякка-рах илсе кайрӗ те, ҫирӗппӗн ыталаса илсе чуптурӗ...

— Ан ҫилен, ҫыр, пурнӑҫра тӗл пулӑпӑр-ха...— терӗ.

— Ҫапах та, юлашки вӑхӑтра ма пымарӑн-ха эс?—хуллен кӑна ыйтрӑм эп.

— Малтан... сан кӑмӑлна сӑнаса пӑхас терӗм. Унтан, сан ҫыруна илсен, пыма хатӗрленнӗччӗ— май килмерӗ, сасартӑках пире районсене ик эр-

нелĕх командировкăна ячĕç, виçĕмкун çеç таврăнтăм. Ĕнер ав юлташу пычĕ. Ыттине пĕлетĕн...

Ку сăмахсем ман кăмăла татах та çемçетсе ячĕç.

— Чунăм... — тесе чăмăртарăм Таня аллине.— Эпĕ вĕт сана ун чухне, хам валли кучченеçсем илсе пустуй расход тутарас мар тесе кăна каласаттăм...

Вăл кулса ячĕ.

— Кучченеçсене эп илнĕ-и? Ăна сана валли ман юлташсем, пĕрле вĕренекен хĕрачасем илнĕ... Кашниех сана мĕн те пулин парса ярасшăн çунатчĕç!

— Кӳрентертĕм пулсан — каçар эппин... Ан ман, тен тĕл пулăпăр-ха пурнăçра,—терĕм эпĕ.

Ку сăмахсене эпĕ малашне мĕн пулассине пĕлсе тăнă пекех каланă иккен. Хĕлле эпир унпа Финляндире чăнах та тĕл пултăмăр...

Эстония,
сентябрь, 1940.

# С А В Ă Н Ă Ç

Эхер те, эп вилес пулсан та,
Мана хисеплĕр большевик тесе...

*(Фронтри сăвăран).*

Чикĕ урлă каçнă хыççăн Н-ский батальон тăваттăмĕш кун ĕнтĕ хăйĕн секторĕпе малалла пырать. Тăватă кун хушшинче батальон хăйĕн çулĕ çинче тĕл пулакан финсен нумай бандитла отрячĕсене аркатрĕ, йĕплĕ пралук картисене ватса, тĕлĕнмелле чеелĕхпе лартса тултарнă минăсене тасатса, çĕмĕрсе хăварнă кĕперсене хăвăрт тӳрлетсе, таттисĕр, пĕрмах малалла шурĕ. Ывăнни çинчен никам та пĕр сăмах та шарламасть, тĕрĕссипе ăна боецсем сисмеççĕ те, мĕншĕн тесен кашнин чĕринчех пĕр ĕмĕт:

— Малалла, хăвăртрах малалла...

Батальон пуçĕнче, çӳллĕ кăвак лаша çинче, сарлака хулпуççиллĕ, кăшт курпунтарах комбат ларса пырать.

Ĕнер ирхине, К. шывĕ урлă кĕпер тунă чух, леш енчи йывăççем хушшине вăрă пек пытанса выртнă белофинсем сасартăк пулеметсемпе, автомат-пăшалсемпе пеме тапратрĕç. Батальон хăвăрттăн ик еннелле сарăлса, тăшмана хирĕç сунтарма тытăнчĕ. Пĕр çирĕм минут хушши таврари сывлăшра пулеметсем шатăртатни, пульăсем пин-

пин сăпсасем пек нăйлатса шăхăрни çеç илтĕнсе тăчĕ. Кунпа пĕрлех, батальонăн икĕ флангĕнче те минометсем пĕтĕм вăрмана чĕтретсе кĕрслетме тытăнчĕç, çырман леш енче, тăшмансем пытанса ларнă çăра туратлă йывăçсем патĕнче пирĕн гранатăсем шартлата-шартлата çурăлни илтĕнчĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ, финсен пулемечĕсем шарлами пулчĕç, гранатăсемпе минометсем хупларĕç вĕсен çăварĕсене...

Финсем вăрман ăшне шалалла тарчĕç курăнать, кĕпер туса пĕтмен пирки, батальон вĕсене хăвалаймарĕ.

—Пурпĕрех пирĕн алла лекеççĕ-ха вĕсем, инçех тараймĕç, — терĕ комбат, батальон умне тухса тăрса. Вăл çырма хĕрринчех, никамран малта, финсене ручной пулеметран ăшаласа выртнă иккен.

Ун патне тулли те çаврака питлĕ, хĕсĕкрех куçлă, хура сăнлă кĕçĕн командир пычĕ.

— Юлташ капитан! Сирĕн юн юхать!—терĕ вăл, пўрнипе комбатăн пичĕ çине кăтартса. Çавăнтах, тепĕр еннелле çавăнса, хыттăн кăшкăрчĕ:

— Санита-ар! Санинструкто-ор!..

Комбата чăнах та сылтăм тăнлавĕнчен суранланă иккен. Анчах та вăл медпункта каясси çинчен илтесшĕн те пулмарĕ. Санинструктор пырса суранне çыхсанах, вăл хăй патне çавăтса пынă лаши çине утланса ларчĕ.

— Юлташ капитан, астăвăр, кайран япăх ан пултăр... — сăмах хушрĕ унăн суранне малтан асăрханă кĕçĕн командир.

— Ан хăра, Джунгали, нимĕн те нулмасть! Пĕчĕк ача-им эпĕ пуля кăшт шăйăрса кайнăшăнах стройран тухма?—терĕ те ăна комбат, батальона çырман тепĕр енне каçарма пуçларĕ.

Джунгали хăйĕн отделенине кайса тăчĕ.

— Маттур пирĕн комбат... — шухăшларĕ вăл.— Çав тери хăюллă, паттăр чĕреллĕ этем...

...Çул çинче, унта та кунта, батальон çывхарнине кура каялла пăхмасăр хăвăрт таракан финсем пăрахса хăварнă вĕрçĕнĕ велосипедсем, йĕлтĕрсем, патрон ещĕкĕсем выртаççĕ. Хăшĕсем — çăмăлланма — шинелĕсене те хыва-хыва ывăтнă. Вăрçă пуçланиччен хăйсен «паттăрлăхĕпе» тем пекех мухтаннă шюцкорсем халĕ мулкачсем пекех тараççĕ-мĕн!

Майĕпе каç пула пуçларĕ, батальон ансăр çул тăрăх пĕр пысăк уçланкă хĕрнелле тухрĕ. Комбат лашине чарса çĕре анчĕ те, командирсене халех хăйĕн патне пухăнма хушрĕ. Вĕсемпе вăл мĕн калаçнине никам та илтмерĕ, анчах та вунă-вунпилĕк минутран пурте пĕлчĕç: ирччен батальонăн çак уçланкă хĕрринче тăмалла.

Часах çăра туратлă чăрăшсем айне палаткăсем карăнчĕç, вĕсен ăшĕнче пĕчĕкçеç кăвайтсем çунма пуçларĕç. Халăх йышлă пулин те — ним шав та çук, пурте шăппăн кăна калаçаççĕ, мĕншĕн тесен — тăшман усал та чее, унран кирек мĕнле ирсĕрлĕхсем те кĕтме пулать... Часах пăшăлтатни те илтĕнми пулчĕ, боецсем — кункаçа ĕшеннĕ хыççăн — çывăрма выртрĕç. Темиçе сехетлĕх «лагерь» йĕри-тавра кăларса тăратнă караулри

боецсем ҫеҫ ҫывӑрмаҫҫӗ, вӗсем никам асӑрхамалла мар вырнаҫса, винтовкисене, пулеметсен аврисене хыттӑн пӑчӑртаса, вичкӗн куҫӗсемпе тӗттӗмелле пӑхса, таврара епле те пулин сас-чӗв пуласса итлесе выртаҫҫӗ.

Джунгалийӗн тӑруках ыйхӑ килмерӗ... Юлашки темиҫе кун хушшинче пулса иртнисем унӑн куҫӗ умӗнче пӗрин хыҫҫӑн тепри шуса иртрӗҫ. Унтан вӑл хӑй пӗлтӗр кӗркунне Хӗрлӗ Ҫара мӗнле тухса килнине аса илчӗ. «Кзыл Аскер» колхоз хӑйӗн чи маттур джигитне ҫав тери савса ӑсатрӗ, хура куҫлӑ Эмине, асӑнмалӑх, ҫынсем куриччен хӑрах алкине хывса пачӗ.

— Ан ҫухат... Алкама ҫухатсан, пирӗн юрату та ҫухалӗ...

Тепӗр ирхине вӑл юлташӗсемпе пӗрле панулми хулине — илемлӗ Алма-Атана ҫитрӗ, вӗсене поезд ҫине лартрӗҫ, вунӑ кунтан Ленин хулине, Джунгалие хӑйӗн чапӗпе калама ҫук тӗлӗнтернӗ Ленинграда, пырса тухрӗҫ. Вӗренӳ пуҫланчӗ... Кунран-кун Джунгалишӗн тӗнче сарӑлса пынӑ пек туйӑнчӗ, кунран-кун унӑн умӗнче пурнӑҫӑн ҫӗнӗрен ҫӗнӗ страницисем уҫӑлса пычӗҫ... Ҫуркунне лагерти пурнӑҫ пуҫланчӗ... Кунта Джунгалийӗн тата пысӑк савӑнӑҫ пулчӗ: ручной пулеметчиксен сборӗнче пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑшӑн комбат ӑна пӗтӗм батальон умне чӗнсе кӑларса тав турӗ те аллӑ тенкӗпе парнелерӗ... Унӑн сӑнне хаҫатра пичетлесе кӑларчӗҫ,—хаҫат тухнӑ кунах Джунгали ӑна Эмине патне ярса пачӗ.

Тепӗр ик уйӑхран Джунгалие батальон штабне

чĕнтерчĕç. Комбат яланах шăтарас пек пăхакан куçĕсемпе Джунгалие пăхса илчĕ, унтан ларма хушрĕ.

— Сана эпир паянран пуçласа отделени паратпăр, эсĕ — командир пулатăн,—терĕ.

Джунгали, кун пек хыпара кĕтменскер, ялтах сиксе тăчĕ.

— Ан пăлхан, ан пăлхан, лар, — аллипе пукан çине кăтартрĕ комбат. — Эп каланине кирлĕ çĕрте çирĕплетнĕ ĕнтĕ... Çапла, командир пулатăн. Эпир сана шанатпăр... Анчах та асту, Хĕрлĕ Çар командирĕ пуласси вăл—питĕ пысăк чыс, вăл чыса таса тытма пĕлес пулать... Ăнланатăн-и?

— Ăнланатăп,—терĕ Джунгали, каллех ура çине тăрса,—анчах та... пултарайăп-ши эп? Вырăсла та начартарах...

Анчах комбат ăна каласа пĕтерме памарĕ, пӳлчĕ.

— Кирлĕ мара калаçатăн! Сан пек каччăсем пултармасан тата... Эпир пурте малтан сан пек пулнă.

Комбат пирус чĕртрĕ, Джунгалие те туртма пачĕ, унтан хăй епле командир пулни çинчен каласа кăтартрĕ. 1918 çулта, Совет çĕршывне пур енчен те тăшмансем тапăнса хĕсме тытăннă вăхăтра, вăл—Питĕрти пĕр заводра «подручный» пулса ĕçлекен 16 çулхи ача—хăй ирĕкĕпе çара çырăнса фронта кайнă. Ик-виç çул хушшинче пур фронтсенче те пулса курнă, фронтрах командир пулса тăнă.

— Пурăна-киле эсĕ те пысăк командир пулатăн

акă... Чĕререн тăрăшни, тата хамăр çĕршыва чунтан юратни пулсан, этем теме те çĕнсе илĕ, Джунгали!—терĕ вăл юлашкинчен.

Çакăнтан вара комбат Джунгалишĕн хаклăран та хаклă çын пулса тăчĕ. Мĕнпур вăйне хурсах тăрăшрĕ Джунгали, «Кзыл Аскер» колхозри джигит. Çакăн пиркиех вара вăл ырятсăр пуçне нимĕн те илтмерĕ аслă командирсенчен.

...Кункаçа ĕшенни çĕнтерсе илме пуçларĕ. Джунгалийĕн куçĕсем хăйсемех хупăнчĕç, шăмшак тăрăх темле ырă ăшă сарăлса кайрĕ, шухăшсем татăлчĕç. Тем вăхăт çыврнă вăл... Сасартăк такам шăппăн кăна хăйне хушаматпа чĕннине илтсе вăранса кайрĕ.

— Джунгали!.. Юлташ Джунгали...

— Мĕн? — хăвăрт тăрса ларчĕ вăл. — Кам?

— Эпĕ ку, эпĕ...

Джунгали взвод командирĕн сассине палларĕ.

— Сана комбат чĕнет...

Джунгали пĕр сăмахсăрах сиксе тăчĕ те, хăйĕнпе юнашар выртакан боеца вăратрĕ.

— Мана чĕнеççĕ, ман вырăна эсĕ юлатăн.. Асту!

— Есть! — терĕ боец, палаткăра выртакансене пăхса çавăрăнса.

Ик минутран лейтенантпа Джунгали комбат палаткине пырса кĕчĕç. Комбат çывăрма шутламан та иккен, аран-аран çунакан кăвайт умне пĕшкĕнсе, карттă çине пăхса ларнă.

— Тăхтăр пăртак,—терĕ вăл, пырса кĕнисем çине пăхмасăрах. Унччен те пулмарĕ—палатка

хĕрри çĕкленчĕ, палаткăна тата икĕ кĕçĕн командир кĕрсе тăчĕç:

— Юлташ капитан, эсир хушнипе килтĕмĕр!

— Юрĕ...—комбат сылтăм аллине карттă çине хучĕ.—Акă мĕн, юлташсем... Сире эпĕ питĕ ответлă задача пурнăçлама яратăп. Пăхăр, çакăнта...—Вăл пӳрнипе карттă çине тĕллерĕ.—Эпир халь çак вырăнта тăратпăр. Ку—юнашар уçланкă. Унтан каллех вăрман пуçланать. Ик-виç километр та Х. ялĕ. Сирĕн, кĕçĕрхи каç тĕттĕммипе усă курса, Х. ялне çитсе килес пулать. Белофинсем пур-и унта, çук-и? Йышлăн-и? Орудисем пур-и вĕсен?.. Пирĕн çул çинче мĕнле чăрмавсем пулма пултараççĕ?..

Комбат йĕркипе каласа пачĕ, мĕнле майпа каймаллине кăтартрĕ.

Виçĕ кĕçĕн командир—виçĕ çамрăк паттăр — задачăна тĕрĕс ăнланнине пĕлтерсе ответлерĕç.

Унтан—мĕнле килнĕ çавăн пекех, шăппăн, палаткăран тухса разведкăна кайрĕç.

* * *

Комбат панă задачăна разведчиксем тĕп-тĕрĕс пурнăçларĕç. Вăрман варринче ларакан ял патне виççĕн виç енчен упаленсе пырса, картасем, килçуртсем, хӳмесем çуммипе йăпшăнса, яла урлă-тăрăхах «хыпашласа» тухрĕç. Никам та çук иккен, ял пуш-пушах. Чĕр-чунсенчен пĕр тăлăх йытăпа икĕ пăрусăр пуçне никама та тĕл пулмарĕç вĕсем.

— Кулаксем пурăннă пулмалла кунта, çурчĕсем

ытла лайӑх, тата кил таврашӗнче машинӑсем те нумай...—шухӑшларӗ ялӑн анат вӗҫне тӗрӗсленӗ Джунгали.—Чухӑнсен ун пек пулас ҫук! Ҫавӑнпа тарнӑ та вӗсем... Комбата ҫавӑн пекех каласа паратӑп...

Вӑл ял хыҫӗнчи юлашки карта урлӑ каҫрӗ те, таврари шӑплӑха пӗр-ик минут итлесе выртнӑ хыҫҫӑн—вӑрманалла упаленсе кайрӗ. Юлташӗсемпе тӗл пулма калаҫса татӑлнӑ ҫӗре, пӗр пӗчӗк ҫырма пуҫне ҫитсен, ҫамрӑк чӑрӑш айне пытанчӗ.

— Аван пулчӗ-ха ку паян. Приказа пурнӑҫларӑмӑр. Ял—пушӑ, ирпе хӑюллӑнах килме пулать... Анчах та, юлташсем мӗншӗн килмеҫҫӗ-ха? Ҫӗтсе каймарӗҫ-ши?

Вӑхӑт шурӗ... Ҫур сехет иртрӗ, унтан пӗр сехет. Джунгалийӗн урисем шӑнма пуҫларӗҫ, айӗнчи юр ирӗлсе пӑрланма тытӑнчӗ. Юлташсем кӗҫ-вӗҫех тухаҫҫӗ пуль тесе, вӑл тата тепӗр ҫур сехет кӗтсе выртрӗ. Урисем ыратакан пуличченех шӑнса кайрӗҫ, пӗтӗм шӑм-шак чӗтреме пуҫларӗ.

—Мана тӗл пулайманнипе—иккӗшех кайнӑ пулас,—шухӑшларӗ Джунгали юлташӗсем ҫинчен.— Капла выртсан, ырри пулас ҫук, каяс...

Чӑрӑш тӗми айӗнчен шуса тухрӗ те мӑн вӑрман ӑшне кӗрсе кайрӗ. Вӑрманта—хӑрушла шӑплӑх, пӗтӗм тӗнче пӗр харӑс сывлами пулнӑ пекех туйӑнать. Тӗттӗм, куҫран чиксен те курӑнмасть, ура айӗнчи шурӑ юр ҫеҫ тӗксӗм-кӑвакӑн палӑрать. Джунгали пӗр йывӑҫ патӗнчен тепӗр йывӑҫ патне, шӑппӑн, туратсене чӑштӑртаттармасӑр пыма тӑрӑшса утрӗ. Пӗр километр ытларах

кайсан, вӑрманта сасартӑк кӑштах ҫутӑлнӑ пек пулчӗ. Джунгали ҫӳлелле пӑхрӗ. Ҫӑра пӗлӗтсем хушшинчен чалӑш уйӑх шуса тухнӑ иккен.

—Хамӑрӑннисем патӗнчен кайнӑранпа вӑхӑт та нумай иртнӗ ӗнтӗ, тен, часах ҫутӑлать те пулӗ...

Чӑнах та, майӗпе кӑвак ҫутӑ ҫапма пуҫларӗ. Джунгали, хӑрах аллипе шинель аркисене ҫӗклесе, хӑвӑртрах утма пуҫларӗ. Батальона часрах ҫитес пулать-ҫке, пӗлтерес пулать мӗн пулнине, ирпе-ирех батальонӑн малалла наступление каймалла!

Сасартӑк, сылтӑм енче хӑрӑк турат хуҫӑлнӑ сасӑ илтӗнчӗ...

Джунгали пӗр йывӑҫ кутнелап выртрӗ те сас илтӗннӗ еннелле мӗнпур куҫ вӑйӗпе пӑхма тытӑнчӗ. Пӗр минут иртрӗ, иккӗ. Татах тепӗр турат хуҫӑлчӗ.

— Финн... — шухӑш вӗҫрӗ те Джунгали пуҫӗнче, унӑн аллисем винтовкӑна ҫатӑрах пӑчӑртарӗҫ. Унччен те пулмарӗ, вӑл пӗр йывӑҫ патӗнчен теприн патне темле мӗлке сиксе каҫнине асӑрхаса юлчӗ.

— Вӗсен разведчикӗ пулмалла,—шухӑшларӗ Джунгали.—Йывӑҫ тӑрринче ларнӑ пулӗ-ха... Курӑпӑр, мӗн пулӗ! Эх, чӗррӗн тытса кайсан аванччӗ!.. «Чӗлхе» пулатчӗ...

Ҫапла шухӑшларӗ ҫеҫ—хайхи мӗлке каллех тепӗр тӗмӗ патнелле ыткӑнса каҫрӗ.

Джунгалийӗн чӗри кӑкӑртан сиксе тухас пек тапма тапратрӗ. Тӑшманӑн разведчикне чӗррӗн тытса каяс шухӑш ӑна калама ҫук пӑлхатса ячӗ.

Вăл йывăç айĕнчен тăчĕ те мĕлке курăннă çĕрелле хăвăрттăн шума тытăнчĕ. Тул çутăлнăçемĕн çутăлса пычĕ, ĕнтĕ вăрманта вунпилĕкçирĕм чалăшра аванах курăнакан пулчĕ.

— Кĕрĕс!—турĕ кĕтмен çĕртен пăшал сасси малти тĕме айĕнчен... Пуля хăлха çуммипех шăхăрса иртсе, темле йывăçа шатлатса çапăнчĕ. Тăшман Джунгалие асăрхарĕ иккен. Джунгали самантлăха пуçне юр ăшне чикрĕ, анчах çавăнтах çĕкленсе малалла пăхрĕ, хайхи тăшман йывăçсем хушшипе кукăр-макăрăн чупса кайнине курчĕ.

— Ну, манранах тараймăн!—терĕ те Джунгали хăйне хăй шăл витĕр, тăшман çулне пӳлсе татас шутпа, тӳрĕрен тӳрĕ чупрĕ. Пĕр самантлăха тăшман мĕлки курăнми пулчĕ. Малта çырма пулнă-мĕн. Джунгали пĕтĕм вăйран чупса пырса çырманалла кусса анчĕ те, кăкăр таран шыва кĕрсе кайрĕ... Çавăнтах тепĕр еннелле сиксе тухрĕ те каллех хăвалама тытăнчĕ.

— Пурпĕрех тараймастăн...

Тăрук ун хыçĕнче пăшал сасси кĕрслетрĕ. Пуля Джунгалийĕн питçăмартине çунтарса илчĕ. Хăйĕн хыçĕнче те тăшман пуррине шута илсе, вăл вилнĕ пек пулса ӳкрĕ. Самантранах аяккалла упаленме тытăнчĕ, лăпсăркка тураттисене çĕре çитиех саркаланă чăрăш айне пытанса йăпшăнчĕ.

Питçăмарти тăрăх юн чарăнма пĕлмесĕрех юхрĕ. Пырĕ типсе ларчĕ. Джунгали çăвар тулли юр хыпса илчĕ. Сывламасăр итлерĕ... Темшĕн, çав вăхăтра йывăç тăррисем кашлама пуçларĕç. Таçта

инçетре, сылтăм енче, орудисем кĕрслетни илтĕнсе кайрĕ.

Çак хушăрах—инçетре те мар—йывăçсем хыçĕнче тăшмансем çывхарса килни сисĕнчĕ. Йывăçсем хушшипе кăштăртатни, типĕ туратсем хуçăлса шартлатни, нӳрĕ юр нăтăртатни Джунгалие уççăнах илтĕнчĕç ĕнтĕ.

Акă, унăн куçĕсем çывăхрах пĕр тăшман мелкине тытрĕç. Алăсем хăйсемех винтовкăна çĕклерĕç, пӳрне курок çине пусрĕ. Çавăнтах пăшал сасси янăраса кайрĕ.

— Са-атана!—уççăнах илтĕнчĕ тăшман хаяррăн кăшкăрни. Белофинн çĕрелле йывăррăн персе анчĕ.

— Курăпăр-ха, кам кама тĕп тăвĕ!—савăнăçлăн шухăшларĕ те Джунгали, тепĕр чăрăш айне кушак пек сиксе каçрĕ.

Ун çинелле харăссăн темиçен персе ячĕç. Пăшал сассисем вăрманти шăплăха çурса, таçта çитиех кĕрлесе кайрĕç.

— Курăпăр-ха...—терĕ Джунгали тепĕр хут, татах урăх йывăç патне чупса каçса. Анчах пăшал пенисем йышлансах пынине кура, обстановкăна хакласа илчĕ:—Капла май килмест... Эп пĕччен, хамăрăннисем патне тухас пулать!

Тĕмĕсем хушшинче каллех мĕлке курăнчĕ. Джунгали ун çине тĕллесе курока туртрĕ те, тепĕр белофинн, малтанхийĕ пекех, темскер кăшкăрса йывăррăн ӳкнине курчĕ. Халь ăна хăйне те пур енчен те пеме тапратрĕç. Вăл хăйĕнчен инçетре мар тарăн çырма, унтах тăвăлпа ӳкнĕ йывăçсем пуррине асă илчĕ. Пĕрре сылтăмалла,

тепре сулахаялла, унтан каялла печě те, çырма патнелле ыткăнчě. Пăшал сассисем пěтěм вăрманěпех янăрарěç ěнтě... Таврара пульăсем шăхăрчěç кăна. Пěри Джунгалие пěçěрен çыртрě. Вăл çырана чупса çитсе аялалла сикрě, каллех кăкăр таран шыв урлă шăмпăртатса каçрě. Акă ěнтě, купаланса выртакан йывăçсем...

— Халь килěрех!—терě Джунгали, темле шăтăка кěрсе тăрса. Аллисем винтовкăна хăвăрт авăрларěç, куçěсем йěри-тавра мěн пуррине хыпашларěç...

Тăшмансем ун йěрěпех чупса пынă-мěн. Джунгали сывлăш çавăрма ěлкěричченех—сăртра пěр белофинн кěлетки курăнчě. Джунгали персе ячě, тăшман çӳлтен пăрахнă каска пекех йăванса анчě çырма тěпěнчи юханшывалла. Самантранах ун хыççăн тепри чăмрě...

Сылтăм хулпуççие витěрех такам сивě йěппе чикнě пек туйăнчě, унтан вěри пулса кайрě. Ěнтě, тăшмансем ăна виççěмěш хут суранлатнине вăл аванах ăнланчě, ун куçěсем темле тěтре витěр пăхнă пек çеç куракан пулчěç, анчах та вăл, юлашки вăйěсене пухса, обойма хыççăн обойма пушатрě. Юр çинчи пушă гильзăсен купи пысăкланса пычě.

—Тăван çěршывшăн...—çирěппěн çыртса лартнă шăлěсем витěр пăшăлтатрě вăл, пěтěм чун-хавалне пухса.—Найăр, илěр манăн юлашки купчěнеçе!..

Вăрманта пăшал пени ку вăхăтра татах вăйланчě. Таçта инçетре те мар, Джунгалисен ба-

тальонĕ вырнаçнă енчен, темиçе ручной пулемет урнă пек шатăртатма тапратни хăлхана пырса кĕчĕ.

— Ăррр... ăррр...—темле типĕ сасăпа ĕрлеме тытăнчĕç кĕске черетсем, унтан вара, кăшт тăхтасан, дискĕ-дискĕпех кăларса яма тытăнчĕç курăнать. Пĕр çĕр-çĕраллă чалăшран аякра та мар—умлăн-хыçлăн икĕ граната сиксе çурăлчĕç, —пĕтĕм вăрман чĕтресе кайрĕ...

— Неушлĕ кусем пурте мана переççĕ?—шухăшласа илчĕ вăйсăрланнăçемĕн вăйсăрланса пыракан Джунгали.—Юлташсем ăçта-ши? Тен, ку пулеметсем—пирĕн? Тен, мана пулăшма килеççĕ?

Леш енчи çыранра, шăпах ик-виç минут каялла икĕ белофинн шывалла чикеленсе аннă вырăнта, каллех тăшман курăнчĕ. Вăл йывăç çумне пĕшкĕнсе автомат-пулемета вырнаçтарма тытăннине Джунгали курчĕ те, кăкăр умне чикнĕ чăмăркка гранатăна туртса кăларса, пур-çук юлашки вăйне пухса, тăшман патнелле ывăтрĕ...

Граната сиксе çурăлса кайрĕ...

Тĕтĕмпе, çулăмпа, тăпăлнă çĕрпе пĕрле—сывлăшалла белофинпа унăн пулемечĕ те пĕр метр пек çĕкленчĕç, унтан иккĕшĕ те пĕр харăсах çырма тĕпнелле сирпĕнчĕç...

Анчах Джунгали хăй те пачах вăйсăрланса çитрĕ. Кăкăрта тӳсме çук вĕриленсе, вутпа çунтарнă пек çунакан пулса кайрĕ. Вăл аран-аран пĕр ывçă юр илсе хыпрĕ. Пуçĕ çаврăнма пуçларĕ, чĕркуççисем хутланса анчĕç.

— Мĕнле-ха... Эп заявленине параймарăм пу-

лать...—йывăр тĕлĕкри пек шухăш çуралчĕ унăн.

Сулахай аллипе кăкринчен, гимнастерка кĕсъи тĕлĕнчен тытрĕ. Унта, гимнастерка кĕсъинче, Джунгали темиçе кун каялла çырнă заявлени выртнă, вăл хăйне парти кандидатне илме ыйтнă, анчах та ăна памашкăн тăхтаса тăнă—çапăçусенче паттăр ĕç тунă хыççăн авантарах пулать, тенĕ. Çав кĕсъерех çаврака çутă кĕмĕл алка—хура куçлă Эмине парни выртнă...

Вăрман хытăран хытă кĕрлерĕ.

Ĕнтĕ, пулеметсем çывăхрах шатăртатрĕç, унта та кунта гранатăсем çурăлчĕç, такамсем команда парса кăшкăрнисем илтĕнчĕç.

Джунгали ăнран кая пуçларĕ...

Юлашки хут унăн куçĕ умне, тĕтре витĕр курăннă пек, хăйĕн тăван килĕ, ватă амăшĕ, колхозри джигитсем, хура куçлă Эмине, комбатăн хăюллă сăнĕ, разведкăна пĕрле кайнă юлташĕсем курăнса иртрĕç...

Вăрман çаплах кĕрлесе тăчĕ.

Джунгалирен инçетре те мар, хулăм сасăпа кăшкăрнă команда янăраса кайрĕ.

— Вперед, за мной!.. В атаку!..

— Урра-а!..

Джунгали ăна илтмерĕ.

* * *

Вăл виçĕ кунтан Л. хулинчи госпитальре вăранса ăна кĕчĕ.

Шапшурă таса стенасене, хăйĕн пуçĕ патĕнче пукан çинче ларакан шур халатлă хĕрарăма кур-

сан, вăл нумайччен хăй ăçта килсе лекнине анланаймасăр выртрĕ.

— Ăçта эпĕ? — ыйтрĕ юлашкинчен.

— Больницăра, шăллăм, госпитальре,—терĕ ăна хирĕç йăваш саслă хĕрарăм.—Кунта эс икĕ талăк ытла выртатăн ĕнтĕ...

— Аха-а, калаçма пуçларĕ-и?—савăнăçлăн пуçне çĕклерĕ юнашар койка çинчи çын.—Тавах медицинăна! Хăранăччĕ эпĕ!

Джунгали пуçне ерипен çавăрчĕ те, разведкăра хăйĕнпе пĕрле пулнă юлташне палласа илчĕ. Тăруках унăн чĕри савăнăç ăшшипе тулса ларчĕ.

— Эс те кунта-и?

— Эп те çав! Алла çĕмĕрчĕç, проклятăйсем! Эс пĕлместĕн-ха вĕт мĕнле пулнине...

— Паллах, пĕлместĕп.

Джунгали ăна кĕрсе калаçакан пуласса икĕ талăк ытла пăлхавлăн кĕтсе пурăннă юлташĕ — халь ăна каçса кайсах каласа кăтартма тытăнчĕ.

...Çав каçхине Х. ялĕнче разведка туса пĕтерсен, вĕсем тепĕр юлташĕпе—Джунгалие тĕл пулас тесе вăрман хĕрнелле пынă, анчах та ăна тупайман. Тĕрĕссипе, вĕсем урăх вырăналла тухнă пулмалла. Вара, чылай кĕтсе тăнă хыççăн, батальона иккĕшех таварăнма шут тытнă. Вăрман хушшипе пĕр сехете яхăн пырсан—пăшал сассисем илтнĕ, унтан тăшмансене хăйсене те асăрханă. Вĕсем пурте пĕр еннелле пенине чухласа илсен—ăнланнă: финсем е Джунгалие, е пирĕннисенчен кама та пулин урăххине переççĕ... Пĕр-ик сăмахпа канашласа илсе, лайăхрах пытанса вырт-

нă та, финсене таттисĕр пеме тытăннă. Темиçешне патĕнчех хунă. Çапла пулнă ĕнтĕ: Джунгали сылтăм флангран, кусем сулахайран çунтарнă... Çав вăхăтра, разведчиксем час таврăнманшăн пăлханма пуçласа, тата уçланкăн тепĕр енчи вăрманта, шăп разведчиксен çулĕ çинче вăйлă перестрелка пуçланнине илтсе, комбат пĕр ротăна тăратнă та, уçланкă урлă каçарса янă... Вара белофинсенчен пĕри те чĕррĕн хăтăлайман.

— Нумайăн пулнă-и вĕсем?—ыйтрĕ Джунгали, юлташĕ хăйĕн калавне пĕтерсен.

— Рота таран. Вĕсем пирĕн батальон çулĕ çинче засада тăвасшăн пулнă...

Джунгали çăмăллăн сывласа илчĕ.

«Эппин, эпĕ малтанхи разведчикĕ хыççăн кайни тĕрĕс пулнă...»

— Эпир вара сан пирки питĕ хытă хăрасаттăмăр,—терĕ юлташĕ малалла.—Çырмари шăтăкран сана комбат хăй çĕклесе кăларчĕ тет те, тухтăр пырсан—ăна тӳрех: «темле пулсан та, çак геройăн пурнăçне çăлăр!» тесе каларĕ, тет. Санăн суранусене çыхнă чух ниçта уйăрăлмасăр пăхса тăчĕ, куна эп хам куçпах куртăм. Унтан вара...эс пĕлместĕн-ха... Тепĕр ĕç пулса иртнĕ.

— Мĕн тата?

— Кăнтăрлапа, кăштах каннă вăхăтра, партсобрани пулнă. Унта сана кандидата илнĕ. Санăн заявлени пулнă вĕт?

Джунгали картах siксе, çĕкленме тăчĕ.

— Ай, юрамасть, юрамасть, шăллăм!—аллипе сулса чарчĕ ăна шур халатлă хĕрарăм.—Санăн халь

ҫит лăпкăн выртас пулать! Атту, тухтăр курсан, иксĕмĕре те лекет...

— Чăнах-и? Чăн калатăн-и?—хĕмленекен куҫĕсемпе пăхса илчĕ Джунгали хăйĕн юлташĕ ҫине.

— Аҫа ҫаптăр мана, суятăп пулсан, — терĕ лешĕ.

Джунгали куна хирĕҫ нимĕн те чĕнмерĕ, кăмăлĕ ҫав тери тулса килнипе ҫемҫен кулса илчĕ ҫеҫ.

Темиҫе кунтан, майĕпе тӳрленме пуҫласан, вăл хутпа карандаш ыйтса илчĕ те ҫыру ҫырма тытăнчĕ.

«Савнă чунăм Эмине, сана эпĕ хамăн савăнăҫпа тулнă чĕререн пĕлтеретĕп: эпĕ халь тĕнчери чи телейлĕ ҫын...»

Ленинград, госпиталь.
Декабрь, 1939.

# ПРИКАЗ

Приказ боевой—высший закон!

Çанталăк кунран-кун сивĕтсе пычĕ...

Землянкăн лутра алăкне кăшт уçсанах шăнна сывлăш шалалла шурă тĕтĕм пек мăкăрланса кĕрсе каять, тула тухсан—сывлама та хĕн, кăкăра тытса лартать. Вăрманти темĕн çўллĕш йывăçсем витĕрех шăнса ларнипе хăрнă пек туйăнаççĕ, пĕри те тепри шартлатса çурăлаççĕ. Пур шывсемпе шурлăхсем те тĕпне çитиех шăнса пăрланса ларнă; тарăн юр сивĕпе хытса çитнĕ те, ура айĕнче тăкăскăн кăчăртатать. Анчах землянкăра—ăшă, хушăран мунчари пекех пулса тăрать, алăка уçса сивĕтме те тўр килет.

Инçете, тăшман линийĕсем хушшинех кайса разведка туса килнĕ хыççăн, Петĕрсен отделенийĕ виçĕ кун канчĕ. Задачăна лайăх пурнăçласа тавăрăннăшăн рота командирĕ вĕсене çак кунсенче ниçта та ямарĕ, нимĕнле ĕç те хушмарĕ.

— Вăй пухăр, юлташсем,—терĕ вăл,—малашне тата ответлăрах задачăсем пулаççĕ-ха...

— Юрать, юлташ лейтенант, канăпăр, анчах та, кирлĕ пулсан, эпир халех кайма хатĕр!—пуриншĕн те ответ пачĕ отделени командирĕ.

Петĕр ку хушăра чăнах та аван канчĕ. Тăвату куна яхăн пĕртте çывăрмансkер, пĕрмай сивĕре

кўтнěскер—вăл халь ăшă çěрте тăраничченех çыварчě, унăн сулахай ури ыратни иртсе кайрě (ăна вăл разведкăран таврăннă чух çўллě çыранран сиксен йывăç кăкě çине лексе ыраттарнăччě), çан-çурăма малтанхи тěреклěх таврăнчě. Ытти юлташěсемпе пěрле мунчана кайса çăвăнчě, сухалне хырчě, çўçне кастарчě. Хăйěн çинчен килтисене чылайранпа пěлтерменччě те—икě пысăк çыру çырса ячě: пěрне амăшě патне, теприне (каччăн унсăр пулмастех ěнтě!)—хăйěн савнă хěрě, колхозри клуб пуçлăхě Праски патне. Яланхи пекех, Петěр хăй пирки пăшăрханма кирлě марри, ěçсем аван пыни, юлашки вăхăтра Праские час-часах тěлěкре курни çинчен çырчě, колхозри çěнě хыпарсене пěлтерме ыйтрě.

Петěрěн чи çывăх тусě Галим та—Тěрлемес таврашěнчи тутар йěкěчě—унпа юнашар ларса, юрла-юрлах çырса ларчě. Галимăн тăванěсем пулман, ашшě-амăшě пěр вунă çул ěлěкрех вилнě, анчах колхоз ăна пăхса ўстерсе çын тунă та, халь вăл пěрмаях колхоз председателěпе çыхăну тытнă, тата хăйěн савнă Сахийи патне çырнă...

Çырусене экспедитор пурăнакан землянкăна леçсе таврăнсан, Петěр купăс тытса хуллен кăна чăвашла кěвěсем выляма тытăнчě. Чăвашла самаях чухлакан Галим купăспа пěрле юрла пуçларě.

«Шупашкар туйи,
Шурă туя...»

Çав вăхăтра алăк уçăлчě те, землянкăна взвод командирě, лейтенант Потапов кěрсе тăчě. Вăл

чылай инçетрен килнĕ пулмалла—кĕрĕк çухавиййĕ, çĕлĕкĕ, куçхаршийĕсем пĕтĕмпех пасланса ларнă. Петĕрпе Галим ăна ура çине тăрса саламларĕç. (Ытти боецсем çывăратчĕç).

— Мĕнле пурăнатпăр, юлташсем? Кантăр-и ĕнтĕ? — ыйтрĕ лейтенант, темĕнле ещĕк çине ларса.

— Аван, кантăмăр,—ответ пачĕç туссем.

Лейтенант кĕсъинчен пирус кăларчĕ те:

— Туртатăр-и?—тесе ыйтрĕ.

— Туртас...

Виççĕшĕ те пируссене мăкăрлантарма тытăнчĕç. Пĕр-ик минут пек ларсан, лейтенант çывăракансем еннелле пуçĕпе сулчĕ:

— Лешсем канаççĕ-и-ха?

— Канаççĕ.

— Ну, канччĕр эппин... Кĕçĕр вĕсене валли те ĕç тупăнĕ. Эсир иксĕр тумланăр, разведкăна каймалла пулать.

— Есть,—терĕ Петĕр, нар çинчен тăрса. Ун хыççăн Галим та тăчĕ.

Боеца приказ панă пулсан—ăна хăвăрт пурнăçа кĕртес пулать. Хушнине вăхăтра тумасан пысăк сиен пулма та, кирлĕ мартанах ытлашши вилĕсем пулма та пултараççĕ. Боец пурнăçĕнчи çак тĕп закона аван пĕлсе тăнă Петĕрпе Галим—командир приказ парсанах хатĕрленме тытăнчĕç. Ăшă-рах тумланнă хыççăн вĕсем çиелтен шурă маскировочнăй халатсем тăхăнчĕç, винтовкисене тĕрĕслерĕç, патронсемпе гранатăсем илчĕç, унтан, лей-

тенант вĕсене хăйсен задачине ăнлантарса панă хыççăн, унпа пĕрле землянкăран тухрĕç.

Каç пулма пуçланă ĕнтĕ. Çанталăк татах та сивĕтнĕ пек туйăнчĕ. Сулахайра, ытлашши инçетрех те мар, пирĕн орудисенчен пенисем илтĕнеççĕ.

— Ну, сывпулăр, задачăна ăнăçлăн пурнăçласса шанатăп,—терĕ лейтенант, боецсен аллисене чăмăртаса.

Разведчиксем часах саркаланчăк ватă чăрăшсем хушшине кĕрсе çухалчĕç те, малалла утрĕç.

Чылай вăхăт утрĕç вĕсем...

Йывăçсем майĕпе вĕтелсе пычĕç, вăрман сайраланчĕ, тата пĕртак кайсан, вĕсем пысăк уçланкă хĕррине тухса тăчĕç. Анчах кунта та тўрех йывăçсем хыçне пытанмалла пулчĕ, мĕншĕн тесен финсем хăйсен çывăхри ялĕсене вут тĕртсе янă пирки—йĕри-таврах çап-çутă, кăнтăрлахи пекех курăнать...

— Çакăнта пулма кирлĕ вăл «Вуникkĕмĕш» высота...—терĕ Петĕр кăшт тăрсан, вĕт вăрманлă чалăш-тĕлĕш чул çыранлă сăрт çине кăтартса.— Çак высота çинче мĕн пуррине пĕлмелле пирĕн...

Галим бинокльпе пăхрĕ.

— Унта надолбăсем, тата темиçе рет йĕплĕ пралук...

Сăрт патне тўррĕн кайма май çукки паллă пулчĕ: çутă леш енчен çапать, уçланкăра ниçта пытанма çук, вăрмантан тухсан самантрах курасçĕ те—çулса тăкаççĕ. Çавăнпа та разведчиксем, йывăç тĕмисем хыçне йăпшăнкаласа, уçланкăн çурçĕр еннелле кайрĕç. Хўтĕрех вырăна çитсен

вара, тăхтаса тăмасăрах, вĕсем «Вуниккĕ» патнелле упаленсе шурĕç...

Пăрлă юр çанăсем ăшне, çухависем айне тулчĕ, питсене вутпа çунтарнă пек çунтарчĕ. Разведчиксем çине тăрса, шăла çыртса малалла шурĕç. Ак ентĕ—сăрт пуçланать. Итлесе пăхрĕç — шăпах, инçетре кăна пуртăпа теме каснă сасă илтĕнет.

— Граната хатĕрле,—пăшăлтатрĕ Петĕр, пуçне Галим енне çавăрса.—Эс кунта сăнаса вырт, эп улăхма пуçлатăп... Асту... Ман хыççăн пырăн...

Петĕр чăнкă сăрт çинелле упаленме тытăнчĕ. Темле пулсан та — хăрушă... Малтанах унăн пĕтĕм шăмшакĕ çӳçенсе илчĕ. Кăкринче чĕри чарусăр тапрĕ.

«Сасартăк — финсем асăрхасан?..»

Çавăнтах хăйне лăплантарма тăрăшрĕ:

«Çук, асăрхаймаççĕ . Ав çав чул патне кăна çитесчĕ...»

Çак шухăшпа вăл юр ăшне ытларах путса, пĕтĕм вăйпа, чĕринчи пур хастарлăха пухса малалла упаленсе кайрĕ. Приказа пурнăçа кӳртмеллех, çак сăрт çинче мĕн пуррине пĕлсе каймалла... Тăшман тĕл пулсан — тытăçма хатĕр... Умри пысăк чул пит те çывăх ĕнтĕ—виç-тăват метртан ытла мар. Анчах та, унта çити шуса кайма мĕн чухлĕ чĕре вăйĕ кирлĕ, мĕнешкел хăюлăх кирлĕ! Тен—ун хыçĕнче засада ларать?..

Петĕр аллинчи гранатăна хытăрах чăмăртарĕ те, чупнă пек хăвăрт упаленсе пырса, чул çумне йăпшăнчĕ. Темиçе секунда хушши ним хус-

калмасăр, хăй хашканине пусарса выртрĕ... Унтан пуçне чул хыçĕнчен ерипен кăларчĕ те, тавралăха тинкерсе, пит те тĕплĕн сăнама тытăнчĕ. Пĕр çирĕм метрта — траншея. Сăрт хĕррипе çĕлен пек авкаланса пырса, вăл темиçе блиндажа пĕрлештерет-мĕн... Сăрт варринче, йывăççем айĕнче — ДОТ иккен... Унăн стенисенчен виçĕ амбразура курăнса тăрать. Çиелте ванчăк кирпĕчсем, пĕрене татăкĕсем, авкаланса кукăрăлкаласа пĕтнĕ тимĕр листисем выртаççĕ. Ишĕлме пуçланă мăръерен çинçе кăна тĕтĕм йăсăрланать, шалтан хулăм сасăпа ăнланмалла мар калаçни илтĕнет...

Сулахайра, çурри таран ишĕлсе аннă сарай патĕнче, темле кĕске тумтирлĕ финн салтакĕ юр айне пулнă пĕрене пуçне пуртăпа вартаса, турпас туса тăрать. Акă, блиндажран шурă халатлă тепĕр салтак автомат çĕклесе тухрĕ. Вăл шăнса хытнипе кукăрăлсах ларнă... Хăрах урипе ухсахласа траншея тăрăх утса тухрĕ те, ДОТ патнелле кайрĕ...

Петĕр чул патĕнчен каялла шума тытăнчĕ. Ерипен, кушак пек... Ĕнтĕ, приказа пурнăçа кўртнĕ, ку сăрт çинче мĕн-мĕн пуррине пĕлнĕ, халь часрах командир патне çитсе пĕлтермелле кăна!

— Кайрăмăр... — терĕ Петĕр Галима шăппăн, сăртран анса çитсен.

Разведчиксем юр ăшне тарăнрах кĕрсе выртрĕç те, хамăрăннисем енелле шăвăнма тапратрĕç...

«Часрах вăрмана, хĕрринчи тĕмесем патне çи-

тесчĕ, унта — лăпкăрах, унта ытла хăрушах мар...»

Анчах та вăрмана çитме инçе-ха, сахалтан та виççĕр метр пур. Малта пыракан Галим кĕске перебежкăсемпе чупса кайма шут тытрĕ. Вăшт кăна ура çине тăрса вунă метр пек чупрĕ те — выртрĕ. Каллех тăчĕ — каллех чупрĕ. Çак вăхăтра, сасартăк, хыçалтан автоматсенчен пеме тапратрĕç. Галим часрах юр ăшне ӳксе пытанса выртасшăнччĕ, анчах та — ĕлкĕреймерĕ: ăна çурăмĕнчен пуля пырса çапрĕ... Чăтаймасăр, Галим йăнăшса ячĕ, аллипе кăкринчен ярса тытрĕ, авкаланса илсе пĕтĕм кĕлеткипе «Вуниккĕ» еннелле çавăрăнчĕ те, çурăмĕ çине ӳкрĕ. Петĕр ун патне упаленсе çитсен, Галим йывăррăн сывласа, антăха-антăха калама тытăнчĕ:

— Ну, тусăм... Пĕтрĕм пулас... Пуля витĕрех тухса кайнă... Сывă пул... Шел, сахал çапăçмалла пулчĕ... — Унăн сасси вăйсăрланнăçемĕн вăйсăрланчĕ, сăнĕ шурăхсах пычĕ. — Кай эс... асăрханса упален, манăн йăнăш пулчĕ... тăмалла марччĕ... Разведка результачĕсене... часрах пĕлтер... Сахия патне çырса яр... Тусăм...

Галим пур вăйне пухса, темшĕн çĕкленме тăчĕ, аллине юр ăшĕнчен кăларса, пăшал сассисем илтĕннĕ еннелле чышкипе юнаса илчĕ, унтан тарăнăн сывласа ярса, каллех юр çине ӳкрĕ.

Шăлне çыртса, пĕтĕм кĕлеткипе сиввĕн çӳçенсе пăхса тăчĕ Петĕр хăйĕн тусĕ ăнран тухса пыни çине. Чĕри пăчăртанса, ыратса кайрĕ унăн...

Çара килнĕреннех ялан пĕрле пурăнса, пĕрне-пĕри тăвансем пек юратса пурăннăччĕ вĕсем...

Тăшман пульли Петĕрĕн каскине пырса çапăнчĕ те, рикошетпа çÿлелле шăхăрса кайрĕ. Петĕр часрах пĕшкĕнчĕ, вилнĕ юлташне тутинчен чуптуса сывпуллашрĕ, унăн гранатисемпе винтовкине илчĕ те, малалла упаленсе кайрĕ. Финсем енчен автоматсенчен черетĕн-черетĕн пеме чарăнчĕç, винтовкăсенчен уйрăмăн пени çеç илтĕнчĕ халĕ. Анчах тăшмансем ăна аванах асăрханă курăнать,—пульăсем Петĕр таврашĕнчех шăхăрчĕç, унта та кунта юр ăшне пырса чăмрĕç. Юлташĕ патĕнче тăрмашнă чух Петĕр алшишне çухатса хăварнă-мĕн. Аллисем, шăннипе, ним пĕлми кÿтсе çите пуçларĕç. Çапах та, вăл çине тăрса, пур чунхавалĕпе упаленсе пычĕ: хăрушлăхран часрах тухасчĕ!.. Сасартăк, унăн сулахай алли ĕçлейми пулчĕ. «Лекрĕ!» — тесе шухăшларĕ те вăл, часрах хăяккăн выртса, хăрах аллипе те пулин туртăнса малалла шурĕ.

Сывлăшра темскер ÿлесе ячĕ...

— Миномет...—шухăшларĕ Петĕр. Акă, ку сасă Петĕр пуçĕ çийĕпех иртсе кайрĕ, унтан инçетре те мар, хăлхана хупласа лартмалла шартлатса çурăлчĕ. Самантлăха симĕсрех тĕслĕ, темĕн çÿллĕш çулăм парки курăнчĕ... Унччен те пулмарĕ, Петĕрĕн сылтăм хулпуççине темле йывăр япала пырса çапрĕ...

Халь ĕнтĕ пĕтĕмпех пĕтрĕ... Малалла упаленсе кайма çук, мĕншĕн тесен икĕ алли те ĕçлеймесçĕ. Петĕр мĕнле ÿкнĕ —çав вырăнтах выртрĕ.

— Вилĕм çитрĕ-ши ĕнтĕ?.. Ниушлĕ текех тăвансене те, туссене те... аннепе Праские те кураймăп?..

Унăн аллисем ыратнăçемĕн хытăрах ыратрĕç, ыратнине тӳсмелле мар пулса çите пуçларĕ. Куçĕсене тĕтре хуплама тапратрĕ, темле симĕс-кăвак пăнчăсем сиккелерĕç...

...Юлашкинчен, пăшал пенĕ сасăсем илтĕнми пулчĕç. Тавралăхра паçăрхи пекех шăп пулса тăчĕ. «Халь тăрса утма та юрать пуль», — тесе шухăшларĕ те Петĕр, аллисем тӳсме çук ыратнине пăхмасăрах, тăма пуçларĕ. Анчах, пуçне ăнсăртран каялла çавăрсан, сасартăк асăрхарĕ: «Вуникĕ» сăрчĕ енчен, йĕр тăрăх, шурă халатсем тăхăннă темиçе мĕлке утса килеççĕ иккен... Галим вилли патне çитсен — вĕсем чарăнса тăчĕç те, темĕн тума тытăнчĕç.

— Финсем!..

Ыратни çинчен те самантлăха манса кайрĕ Петĕр.

— Ы-ых, тискер кайăксем!..

Вăл гранатăпа пеме шут тытрĕ, анчах аллисем нимĕн те тăваймарĕç. Тарăхнипе, тутисене юн тухичченех çыртса лартрĕ.

— Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ?..

Çак самантра ун пуçне аван шухăш пырса кĕчĕ: вăл граната аври çинчи ункăна шăлĕсемпе çыртса хывма пуçларĕ. Анчах кун пек туни те, самантрапах, юрăхлă мар пулассăн туйăнчĕ:

— Май килмест... Вĕлереççĕ... Разведка результачĕсене çитсе пĕлтермелле вĕт...

Ĕнтĕ, финсем Петĕртен темиçе утăмра кăна.

Вĕсем хăйсен чĕлхипе калаçни уççăнах илтĕнет. Петĕр хăвăрт кăна шут турĕ:

— Ним хускалмасăр выртас, вилнĕ пек пулса выртас...

Шюцкорсем Петĕрĕн пушă кĕсьисене ухтарчĕç, çумри гранатăсемпе патронсене илчĕç. Унтан пĕри атă кунчинчен çĕçĕ туртса кăларчĕ те, унăн сылтăм хулпуççинчен яштах чикрĕ... Петĕр ним хусканмарĕ, пĕр сас та кăлармарĕ, чăн-чăн вилнĕ çын пек выртрĕ...

Финсем тек тытăнса тăмарĕç, тем çинчен мăкăтартрĕç те — каялла кайрĕç. «Тирпейленнĕ ку!» — терĕç пулмалла ĕнтĕ. Вĕсен урисем айĕнчи юр кăчăртатни илтĕнми пулсан — Петĕр куçĕсене уçрĕ. Пушартан ӳкекен çутă самаях вăйсăрланнă иккен. Таса пĕлĕтре çăлтăрсем сиввĕн ялтăртатса тăраççĕ... Калама та çук шыв ĕçес килет... Аллисене хускатма май çуккипе, вăл пичĕпе каллех юр ăшне тăрăнчĕ те, çăвар тулли юр хыпса илчĕ. Сăрт еннелле пăхрĕ — никам та çук. Аран-аран, шăлне çыртса, ура çине тăркаларĕ те, юн нумай юхнипе вăйсăрланса çитнĕ пирки сулăнкаласа, вăрман патнелле утрĕ.

«Хыçалтан пемеççĕ... курмаççĕ-ха эппин...»

Вăрман хĕррине çитсен, Петĕр ӳкрĕ. Кăшт выртсан—каллех тăрса утрĕ. Малта, йывăççем хушшинче, çын мĕлкисем палăрчĕç.

— Ниушлĕ каллех финсем-ши?—пуçĕ пĕçерсе илчĕ Петĕрĕн...

Сулăнса кайрĕ те — пĕр йывăç кутне ӳкрĕ. Унăн ĕнтĕ юлашки вăйĕсем пĕтсе çитрĕç, ним

майсӑр пуҫӗ ҫаварӑнчӗ, ашчикки пӑтранчӗ, пырӗ ҫунчӗ... Ӑна такамӑн вӑйлӑ аллисем ҫӗклесе тӑратрӗҫ. Пӗр вӑхӑтлӑха тӑна кӗнӗ Петӗр хӑйне ҫӗкленӗ ҫынна палларӗ: вӑл хӑйсен взвочӗн командирӗ, лейтенант Потапов пулнӑ иккен.

— Приказа пурнӑҫа кӳртрӗмӗр... Сӑртра — вӑйлӑ ДОТ, пысӑк траншея...—терӗ Петӗр, аран тухакан вӑйсӑр сасӑпа.—Галима пӗтерчӗҫ... Кунтан инҫе мар... Тупӑр...

Урӑх калаҫаймарӗ, каллех ним пӗлми пулчӗ. Ӑна часрах ҫӗклесе кайрӗҫ.

...Тул ҫутӑлас умӗн пирӗн артиллери «Вуниккӗ» текен сӑрт ҫинчи ҫӑхан йӑвине аркатма тытӑнчӗ.

Шупашкар,
декабрь, 1940.

# ПУЛЕМЕТЧИК ЮРЛАТЬ...

Ах, юрă, юрă! Мĕн кăна тумастăн пуль эс этемĕн чĕрипе!..

*Дм. Фурманов.*

Унăн ашшĕ те, аслашшĕ те бандуристсем пулнă. Хĕвеллĕ Украинăри пур çынсем пекех, вăл мĕн пĕчĕкренпех музыкăна юратнă, сăвă-юрăшăн чунне пама хатĕр пулнă. Усерехпе, «парубоксен» шутне кĕме пуçласан, хăйсен ялĕнче вăл пур чи ăста юрăçăсенчен те чи лайăххи пулнă; каçсенче, ачаш хĕвел яштака топольсем хыçне анса пытансан, унăн уçă тенорĕ никам сассинчен те çӳлте янраса тăнă...

— О-о, дуже гарно спивае Лизкин хлопец!.. — тенĕ ун çинчен тăван ял çыннисем.

Пĕррехинче, кĕр енне, вĕсен ялне Киевран темиçе музыкант пырса тухнă. Вĕсем капелла валли лайăх сасăллă çамрăксене суйласа çӳренĕ. Колхоз председателĕ, Тарас Бульба евĕрлĕрех çын, ватă партизан, хăйĕн капмар уссийĕсене шăлса илнĕ те, тӳрех тăлăх Лизавета ывăлĕн ятне асăннă. Музыкантсем ун патне кайса, çамрăк каччăран темиçе юрă юрласа пама ыйтнă. Каччă малтанхи юррăн пĕр-икĕ çаврăмне юрласа парса-

нах — музыкантсем пĕр-пĕрин çине калама çук савăнăçлăн пăхса илнĕ...

— Який могутний тенор!..

— Це вже клад!

— Треба забраты його, треба забраты... — тесе калаçма тытăннă вĕсем. Çавăнтах хăйсене уçă та вăйлă сассипе тĕлĕнтернĕ каччăна Киева чĕннĕ, ун умĕнче малашне епле анлă çул уçăлассине, вăл пысăк театрсенче юрлакан пулассине каласа панă.

Анчах комсомолец Митяй Кульбаченко вĕсене итленĕ-итленĕ те: «килĕшместĕп», — тесе пуçĕпе сулса илнĕ.

Комсомолец Митяй Кульбаченкон пĕр-ик уйăхранах Хĕрлĕ Çара каймалла пулнă. Вăл ĕнтĕ темиçе çул хушши ĕмĕтленсе пурăннă кун çинчен. Кашни кĕркунне, хăйĕнчен аслăрах хлопецсем ушкăнĕ-ушкăнĕпе Хĕрлĕ Çара тухса кайнă чух, вăл çав телейлĕ çынсем çине ăмсанса пăхса юлнă. Час-часах, хăйсен хаттинче çакăнса таракан пĕр карточкăна илсе, ăна пăха-пăха тăнă. Вăл карточка çинче унăн аслă пиччĕшĕн — ирĕклĕ Украинăшăн Петлюра бандисене хирĕç çапăçса вилнĕ хастар пулеметчик Алеша Кульбаченкон сăнĕ пулнă.

— Хăçан эпĕ те пичче пек пулăп-ши? — тенĕ çамрăк Митяй.

Кĕтнĕ вăхăт çитнĕ, ĕмĕтленнĕ ĕмĕт тулнă. Киевран музыкантсем пырса кайнă çул, Митяй хăйĕн çар билетне савăнăçлăн пăлханнипе хыттăн тапакан чĕри тĕлне тытса, призыв комисси-

йĕ ӳмне кĕрсе тăнă. Комисси ăна нӳмай та пăхса тăман, мĕншĕн тесен Митяй çара кайма юрăхлă уççăнах курăннă: тĕреклĕ, патвар, хулпуççисем — аршăн сарлакĕш, пĕр сăмахпа каласан, унăн кĕлетки ăста ваятель ятарласа тунă скульптура пекех пулнă.

— Паллах — юрăхлă! — тенĕ вата тухтăр, куçлăхĕ витĕр Митяй çине юлашки хут пăхса илсе. Çав вăхăтрах сĕтел хушшинче хутсене пăхкаласа ларакан комисси председателĕ сăмах хушнă.

— Кульбаченко юлташ,—тенĕ вăл,—сирĕн вĕт льгота пур, сирĕн аннӳ вата ĕнтĕ, çемьере сансăр пуçне ĕçлекен никам та çук... Çавăн пирки мĕн шутлатăр эсир? Закон тăрăх — юлма пултаратăр...

Митяй кун пек пуласса кĕтмен, вăл хăйне льгота памалли çинчен шухăшламан та. Пĕр-их самант нимĕнле мар пулса тăнă... Унтан, хăйĕн тахçанхи ĕмĕчĕсем пĕр самантрах арканса каясса тавçăрса илсе, татăклăн кăна ответ панă:

— Комиссар юлташ! Мана нимĕнле льгота та кирлĕ мар...

— Аннӳ пирки мĕнле вара?—ыйтнă председатель.

— Аннен çулĕсем чылай пулин те, ĕçре вăл хăшпĕр çамрăксенчен те ирттерет-ха... А манăн Хĕрлĕ Çара темлĕ пулсан та каясах килет. Илмесен — эп хама питĕ телейсĕр çын тесе шутлатăп вара...

Председатель комиссин ытти членĕсемпе темскер калаçса илнĕ. Лешсем пуçĕсемпе сулнă.

— Илетпĕр...

* * *

Митяй пурнăçĕнчи çак паллă та савăнăçлă кун хыççăн икĕ çул иртрĕ. Икĕ çул хушши вăл Инçетри Хĕвелтухăçĕнче Совет çĕршывĕн чиккисене сыхласа пурăнчĕ. Ку хушăра вăл сывлăх енчен татах та çирĕпленчĕ, шăмми-шакки малтанхинчен те патварланчĕ, кунсăр пуçне—халь ĕнтĕ вăл ялта пурăннă чухнехи пек мар, нумай пĕлекен çын пулса тăчĕ...

Çўллĕ, тĕреклĕ пўллĕ, кăлкан пек сарă çемçе çўçлĕ, уяр çанталăкри пĕлĕт пек кăвак куçлă качча кашниех кăмăлланă... Вăл — чарусăр спортсмен; турник çинче, пĕр чарăнмасăр ултă хутчен «хĕвел» туса илет, хăйсен Çар округĕнчи пĕр ăмăртуран та юлман, яланах мĕнле те пулин приз илсе таварăннă... Вăл — снайпер, винтовкăпа хуть хăçан та 30 очкоран 30 очко çапса кăларнă, пулеметпа пенĕ чух та мишене çав тери шăтарса пĕтернĕ... Политзанятисенче — чи активлă курсантсенчен пĕри пулнă, ахальрен мар ăна политрук виçĕ юлташа буксире илсе, пулăшса пыма хушнă. Çакнашкал каччăна юратмасан, кама юратас пулать-ха ĕнтĕ?

Кăнтăрлахи занятисем хыççăн ăна яланах клубра курма пулнă. Кунта та Митяй хăйне часах палăртнă. Полка çамрăк призывниксем çитсен пĕр ик-виç кунтанах, Октябрь уявне хатĕрленес майпа, хор кружокне ертсе пыракан хĕрача—

пĕр лейтенант йăмăкĕ лайăх сасăллă боецсене çырса çÿренĕ. Юрлакансем кирлĕ тенине илтсенех, Митяй хăйĕн ятне кайса çыртарнă. Лейтенант йăмăкĕ, нумай пулмасть Владивостокри музтехникумран вĕренсе тухнăскер, Митяя юрлаттарса пăхсан — Митяйсен ялне Киевран пынă леш музыкантсем пекех хавасланса кайнă:

— Сирĕн тенорпа — Ленский арийĕсене юрламалла!

Вĕсем кашни каç пĕрле репетици тума тытăнчĕç... Октябрь уявĕ каç вара пĕтĕм полк алă çупрĕ Митяйпа лейтенант йăмăкĕ иккĕшĕ юрланисене итлесе. Вĕсем украинецсен, белоруссен, вырăссен, грузинсен юррисене юрларĕç. Нимрен ытла, Митяй Украина халăхĕн «Як посияв мужик, та у полі ячмін» ятлă шÿтлĕ юррине пит ăста юрласа тĕлĕнтерчĕ клубра ларакан боецсемпе командирсене... Çавăнтан вара пĕр вечер та, пĕр концерт та Митяйсăр иртмен. Икĕ хутчен вăл Владивостока красноармеецсен пултарулăхĕн смотрне кайнă, унтан парнесемпе таврăннă.

Çакăн пек пурăннă Митяй Инçетри Хĕвелтухăçĕнче.

Çавсемшĕн юратнă ĕнтĕ ăна юлташĕсем те, командирсем те.

Икĕ çул сисĕнмесĕрех иртрĕ, мĕншĕн тесен Митяй пурнăçĕнче пĕр тĕксĕм самант та пулмарĕ...

Киле тухса каяс чух, каçхине, полк клубĕнче питĕ шавлă ăсату вечерĕ пулчĕ. Кунта вара пулеметчик Митяй Кульбаченко, икĕ çула яхăн Хĕрлĕ Çар çурчĕ çумĕнчи музыка студине çÿренĕ-

скер, ĕлĕкхи пек те мар чĕрене тивмелле юрларĕ тăван Украинăн янравлă юррисене... Переры: вăхăтĕнче сцена хыçĕнче ун умне лейтенант йăмăкĕ пырса тăрса, ăна аллинчен тытрĕ.

— Ыран каятăн эппин, Митяй?..

— Каятăп ĕнтĕ...

— Иксĕмĕр калаçнисене манмарăн-и?

— Мĕн çинченччĕ çав?

— Ара, вĕренме каясси пирки...

— Çук, манман.

— Асту çав! Сан сассу...

Митяй хĕре лăпкăн кăна хулпуççинчен ачашласа илчĕ.

— Çитĕ, çитĕ ĕнтĕ мана мухтама...

— Эп килес çул консерваторине каятăп. Тен, пурнăçра каллех пĕрле пулăпăр, э?.. Çынпа çын тел пулатех тет вăл...

— Пулĕ те пулĕ, Лена... Эп сан патна çырса ярăп...

Ирхине Митяй хăйĕн темиçе юлташĕсемпе пĕрле полкран тухса кайма хатĕрленсе çитрĕ. Çарта юлаканнисем вĕсен аллисене хыттăн чăмăртарĕç, куçĕсенчен ыр кăмăлпа пăхрĕç, çул çинче мĕнле авантарах каясси пирки канашсем пачĕç, тăванĕсене хăйсенчен саламсем калама ыйтрĕç. Çавăнтах комиссар та пырса тухрĕ.

— Ну, сывпулăр, ачамсем,—терĕ вăл киле каякан боецсене пĕрин хыççăн теприне ал парса. — Эсир лайăх служит турăр... Колхозра та, производствăра та кунти пекех ĕçлĕр эппин!

— Тăрăшăпăр,—пуриншĕн те ответ пачĕ Митяй.

— А эсӗ... — комиссар Митяй ҫине пӑхрӗ, — юрлама ан пӑрах, тусӑм! Юрӑ вӑл — пурнӑҫра питӗ кирлӗ япала. Мӗнле калаҫҫӗ-ха: нам песня строить и жить помогает...

— Есть, есть! — кӑмӑллӑн кулса илчӗ Митяй.

* * *

Шӑп кӑнтӑрла паровоз кӑшкӑртса, сывлӑша ҫурса ячӗ, унтан вагонсен буферӗсем чанкӑртатса илчӗҫ те, поезд станцӑран тапранса кайрӗ. Митяй тамбурта тӑчӗ; перрон ҫине пухӑннӑ юлташсем аллисемпе, тутӑрсемпе, хӑшӗсем картусӗсемпе сулнине курчӗ, юлашки хут сывпуллашса кӑшкӑрнисене илтрӗ... Поезд таса хирелле ыткӑна тухсан вара, купене кӗрсе вырнаҫрӗ.

Купере, Митяя хирӗҫ сак ҫинче, мӗн икӗ ҫулӗпех унпа пӗрле служит тунӑ Белоруссия каччи Алеҫ Гнатюк вырнаҫса тӑсӑлса выртма та ӗлкӗрнӗ-мӗн. Вӗсем яланах туслӑ пулнӑ, ялан пӗр шухӑшсемпе пурӑннӑ, хӑйсем илекен ҫырусене те пӗрне-пӗри вулаттарнӑ, пӗр-пӗрин чӗринче мӗн пуррине те пӗлнӗ. Ҫавӑн пирки пех, вӗсем киле пӗр вагонра таврӑнма шут тунӑ.

...Тӑван вырӑнсене ҫитме — ҫул вӑрӑм, нумай вӑхӑт каяс пулать. Ӗнтӗ пӗр тавлӑк ытла вӗҫтерсе пысе кайрӗ вӗсене поезд, анчах ҫулӑн вуннӑмӗш пайӗ те пулман-ха. Митяйпа Алеҫ шахмӑт хӑми ҫинче нумай хутчен ҫапӑҫса илчӗҫ, гитарӑпа мӗн выляма пӗлнине пӗтӗмпех вылярӗҫ, хӑйсене тӑван ялӗсенче мӗнле кӗтсе илесси ҫинчен те кашни хӑй майлӑ шухӑшласа калаҫрӗҫ. Поезд, тыткӑнран хӑтӑлса тухнӑ кайӑк пек, ҫаплах мал-

тан мала ыткӑнса пычӗ. Вагон чӳречисем тӗлӗпе вӑрмансем, станцӑсем, ялсем вӗлтлетсе иртсе юлчӗҫ...

Пӗр полустанокра вӗсем вагон чӳречи витӗр илемлӗ хӗр хӑйсем ҫине пӑхса, сенкер тутӑрпа сулкаласа тӑнине асӑрхарӗҫ. Митяйпа Алеҫ те, кулкаласа, ӑна хирӗҫ аллисемпе сулса илчӗҫ.

— Чипер хӗр,—терӗ Митяй, поезд каллех тапранса кайсан.

— Чипер ҫав,—килӗшрӗ Алеҫ, тарӑнӑн сывласа илсе.—Манӑн Фрося манерлӗ. Кӗтет ӗнтӗ халь вӑл мана... Киле ҫитсенех — авланатӑп...

— Эс ун ҫинчен ытлашши нумай шухӑшлатӑн курӑнать-ха,—сӑмах тӗкрӗ Митяй, хӑрах куҫне чеен хӗссе илсе.—Кӗҫӗр ҫӗрле эс мӗн ҫырса лартӑн ҫав?

Алеҫ кӑштах тытӑнса тӑчӗ.

— Так, ахаль... Пуҫа пынӑ шухӑшсене ҫыртӑм.

— Пӗлетпӗр эпир вӑл шухӑшсене! Фрося валли сӑвӑсем ҫыртӑн вӗт? Эх, тошӗ — поэт!

— Поэт, поэт! — кӳренчӗклӗн ответлерӗ Алеҫ.— А эсӗ ху нихкама та юратмастӑн-и мӗн? Эпир те пӗлетпӗр, апла пулсан. Куртӑм эпӗ леш каҫхине сцена хыҫӗнче лейтенант йӑмӑкӗпе, Ленӑпа, епле шӑкӑртатса тӑнине... Тупа турӑр пуль-ха иксӗр те?

Ҫапла калаҫса пынӑ хушӑра, туссем поезд тепӗр станцине ҫитнине те сисмерӗҫ.

— Остановка! — терӗ Алеҫ сасартӑк, чӳрече витӗр станци ҫурчӗсене курса. — Эп чупса тухса, пируспа ҫӗнӗ хаҫатсем илсе кӗрем-ха!

Вӑл платформа ҫине сиксе тухрӗ. Ҫав вӑхӑтрах, ҫывӑхрах, станци таврашӗнчи ҫӳллӗ хырсем хыҫӗнче оркестр «Интернационал» выляни илтӗнчӗ. Кӑшт тӑрсан, ҫав енчен йышлӑ халӑх «урра» кӑшкӑрса ячӗ.

— Мӗнле праҫник тӑваҫҫӗ ара кунта?—тесе ыйтрӗ Митяй вагоналла кӗрекен ватӑ железнодорожникрен.

— Пирӗн йӗкӗтсем Хӗрлӗ Ҫартан таврӑннӑ, заводри рабочисем вӗсене хирӗҫ кӗтсе илме тухнӑ,—терӗ лешӗ.

— Апла иккен... — Митяй каллех хӑйне тӑван колхозӗнче епле кӗтсе илесси ҫинчен шухӑшларӗ.—Эх, вӗсем те савӑнаҫҫӗ ӗнтӗ!..

Тултан свистокпа вӑрӑмӑн шӑхӑртни илтӗнчӗ.

— Ара, ку Алеҫ ӑҫта кайса кӗчӗ?—йӑпӑр-япӑр алӑк ҫинелле пӑхрӗ Митяй.—Поезд кӗҫех тапранса каять вӗт!.. Тӑрса юлӗ тата...

Поезд чӑнах та кӑртах тапранчӗ, анчах ҫав самантрах купене хашкаса Алес пырса кӗчӗ. Тӳрех аллинчи хаҫата Митяя тӑсса пачӗ.

— На, вула часрах!

Митяй хаҫата хӑвӑрт ҫавӑрса тытрӗ. Унӑн куҫӗсем малти страницӑн сулахай кӗтессинче шултра саспаллисемпе пичетленӗ телеграмма ҫине тӑрӑнчӗҫ.

«ТАСС. Японецсем ним намӑса пӗлмесӗр Совет Союзӗн территорийӗ ҫине тапӑннӑ. Хасан кӳлли патӗнче вӑйлӑ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ».

Телеграммӑна вуласа тухсанах, Митяй хаҫата аяккалла хурса, темиҫе самант нимӗн чӗнмесӗр

ларчĕ. Унăн сăнĕ хăвăртах улшăнчĕ, савăнăçлă куçĕсем тĕксĕмленсе хаярланчĕç. Унтан вăл чӳрече патнелле пырса тăчĕ. Чӳрече хыçĕнче малтанхи пекех тайга, çӳллĕ мар сăртсем шуса иртрĕç, унтан вĕсем урлă тайгара ӳсекен çĕнĕ хула çурчĕсен тăррисем курăнса иртрĕç...

— Н-да,—терĕ пусăраннă сасăпа Митяй, хăй пекех шухăша кайнă Алеç еннелле çаврăнса.— Самурайсем... Провокаторсем...

Алеç чĕнмерĕ, Митяй та урăх шарламарĕ. Темиçе минут хушши вĕсен пуçĕсенче çав тери вăйлă шухăш юххи хăвăрт-хăвăрт шуса иртрĕ. Тепĕр чух вĕт этем кĕске вăхăтрах тем чухлĕ вăхăтшăн шухăшласа ирттерет! Пирĕн туссен те çавнашкал пулчĕ çак минутсенче... Сасартăк, ним чĕнмесĕр ларнă Митяй хуллен кăна юрлама пуçларĕ, унтан кăкăрне сывлăш ытларах туртса кĕртрĕ те, хăйĕн чĕринчи шухăшсене каласа паракан сăмахсене хыттăн юрласа ячĕ:

— Мы и прежде умели не плохо
Посчитаться с врагами в бою,
А теперь до последнего вздоха
Будем драться за землю свою...

Алеç те юрласа ячĕ, вара вĕсем иккĕшĕ вагонри пур пассажирсене илтĕнмелле юрлама тытăнчĕç...

— Весь народ встанет грозно и смело
Как орел на защиту гнезда,
Никогда нас рабами не сделать,
Никому, ни за что, никогда!..

Вĕсен юрри пур итлекенсен кăмăлĕсене хускатса, чĕрисене те çавăрса илчĕ, юррăн малалли сăмахĕсене вара пĕтĕм вагон юрлама тапратрĕ...

Не скосить нас саблей острой,
Вражьей пулей не убить...

Вагон юрларĕ... Нумай саслă юрă вăйланнăçемĕн вăйланса пычĕ. Анчах çав вăхăтра поезд чуппи чакма пуçларĕ, каллех тепĕр станцине çывхарни сисĕнчĕ. Митяйпа Алеç пĕр-пĕрин кусĕсенчен пăхрĕç те, пĕр-пĕрин шухăшĕсене сăмахсăрах ăнланса, хăйсен чемоданĕсене алла илчĕç.

— Кайрăмăр каялла,—терĕç вĕсем пĕр харăсах.—Каялла, границăна! фронта!

Станцине çитсен туссем поезд çинчен анчĕç.

* * *

Хăйсен часне каялла çитсен, вĕсене штабра комиссар тĕл пулса, питĕ тĕлĕнсе кайрĕ:

— Эсир мĕншĕн кунта?—ыйтрĕ вăл.

— Комиссар юлташ, пултараймастпăр... Эпир таврăнтăмăр. Çул çинче хаçат вуласа пĕлтĕмĕр те... Хамăрăн границăсемшĕн çапăçма таврăнтăмăр.

Ку сăмахсем комиссара савăнăçлăн пăлхатса ячĕç. Вăл хăй вĕрентсе ўстернĕ патриотсене пĕтĕм чĕререн юратса, ытала-ытала чăмăртарĕ...

— Спасибо, юлташсем! Эсир кун пек туни çинчен эп хамăрăн командующине пĕлтеретĕп... Халь—кайса канăр, ыран эпир ирпе ирех çапăçусен районне тухса каятпăр!

Анчах комиссартан ытла—лейтенант йăмăкĕ Лена тĕлĕнчĕ... Митяйпа вĕсем санчасть тĕлĕнче тĕл пулчĕç. Унта командир арăмĕсем, (вĕсемпе перле Лена та), пĕр вунă-вуникĕ çын, хăйсен упăшкисемпе пĕрле фронта тухса кайма хатĕрленсе, çапăçура суранланнисене пирвайхи пулăшу памалли медикаментсене илсе тăраççĕ-мĕн.

— Кульбаченко!—хăйне паллана сас чĕннине илтрĕ Митяй, Алеçпе пĕрле васкасах казармăналла пыраканскер. Чарăнчĕ.

Хĕрарăмсем хушшинчен Лена чупса тухрĕ.

— Мĕне пĕлтерет ку?

Митяй, именкелесе, каласа пачĕ.

— Пит аван!—терĕ Лена, куçĕсене вылятса.—Эп калани тĕрĕсех пулчĕ эппин: каллех тĕл пултамăр... Эпĕ те фронта каятăп... Унта та тĕл пулăпăр-ха, тен!

Урăх калаçса тăмалла пулмарĕ,—Ленăна тахăшĕ чĕнсе илчĕ. Вăл Митяйăн аллине чăмăртарĕ те—чупрĕ.

...Тепĕр вунă кунтан, Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусем пĕтнĕ хыççăн, Мускаври темиçе хаçатра Митяй сăнĕ пичетленсе тухрĕ. Унăн айне çапла çырнă: «Отважный пулеметчик М. Кульбаченко, своим пулеметом у высоты Безымянной уничтоживший более 50 японских самураев».

«Работница» журналта—фронтра пулнă хĕрарăмсем çинчен пысăк очерк тухнăччĕ, унта Лена çинчен те—вăл тăшман пульлисем айĕнчех суранланнă боецсене мĕн тери пултаруллăн пулăшнине мухтаса çырнăччĕ...

* * *

Çакăн хыççăн тата вунпилĕк уйăх иртрĕ.

Сасартăк, кĕтмен çĕртен, пĕр лăпкă уяр кунхине, пирĕн таса Совет çĕрĕ çине Финляндия енчен снарядсем килсе ӳкрĕç, сĕт пек шурă та таса юр пирĕн çамрăк патриотсен юнĕпе хĕрелчĕ. Совет çĕршывĕн мирлĕн вĕренекен хĕрӳллĕ ывăлĕсене тăшмансем çав тери тискеррĕн, бандитла меслетпе вĕлерчĕç. Çак самантран пуçласа Совет халăхĕн тӳсĕм курки тулса çитрĕ, вăл ĕнтĕ хăйĕн çурçĕрти кӳршипе текех ыррăн калаçса татăлма май çуккине уççăнах курчĕ.

Темиçе кунтан Хĕрлĕ Çар чикĕ урлă каçса, наступлени пуçласа ячĕ...

Çапăçусен малтанхи кунĕсенчех Н-ски секторта Щуко капитанăн батальонĕ çинчен калаçма тытăнчĕç. Ку батальон белофинсен «ĕнси çинчех ларса» пынă. Пуринчен ытла, батальонăн пĕрремĕш роти пит хастаррăн çапăçни çинчен, вăл рота хăйĕнчен виçĕ хут ытларах йышлă белофинсен егерьский батальонне аркатни çинчен, тата çав ротăра пĕр ытла та нимрен хăраман темле сверхсрочник станковый пулеметпа пуçа çавăрса ямалла паттăр ĕçсем туни çинчен калаçрĕç. Пĕрринче çав пулеметчик хăйĕн пулеметне çăра вĕтлĕх хушшипе тăшманăн окопĕсем патнех сĕтĕрсе пынă та, сасартăк пеме тытăнса, вĕсен пĕр салтакне те окопран тухма паман, тет; тепринче, ротăран пумай мала тухса выртса, тăшманăн утлă разведка взводне хăй патне пĕр çĕр метр

тарапах çывхартнă та, çавнашкалах пĕрне те тарса ӳкме паман, тет...

Çак «тетсем» пурте чăн пулнă.

Вулакан тавçăрса илчĕ те пулĕ: ку пулеметчик—пирĕн тус Митяй Кульбаченко пулнă.

Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусем хыççăн, Митяй тăван çĕршыва тăшмансенчен сыхлас ĕçрен чыслă ĕç те çук тесе, яланлăхах Хĕрлĕ Çарта юлнă-мĕн. Самурайсемпе çапăçнă чух суранланнă пирки ăна пĕр уйăхлăх Хура тинĕс хĕрринчи курорта янă, унтан вăл амăшĕ патĕнче уйăх пуранна, вара каллех чаçе таврăннă. Çур çул ытларах вăхăт иртсен, вĕсене Совет Союзĕн тепĕр хĕррине, Н-ск хулине куçарнă. Çакăнтан вара—фронта кайнă.

...Пĕтĕм çамрăк хастарлăхпа, тăшмана чĕререн кураймасăр, пур вăя хурса çапăçрĕ Митяй. Унăн пулемечĕ Совет халăхĕпе Финляндия ĕçхалăхĕн тăшманĕсене сахал мар çулчĕ, яланах лайăх сехет механизмĕ пек ĕçлерĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ, çапăçусем пуçлансан ик-виç кунтанах, Митяй çинчен мухтавлă хыпар сарăлчĕ.

Митяя ку тата ытларах савăнтарса хавхалантарчĕ, вăл тата тĕлĕнмеллерех подвигсем туса пычĕ.

...Пĕр ирхине Митяйсен роти хăюллă атака туса, белофинсене хăйсен блиндажĕсемпе окопĕсенчен çапса кăларчĕ: финсем ларнă вырăнта, унта та кунта, вĕсем васкаса тарнă пирки пăрахса хăварнă каскăсем, винтовкăсем, пистолетсем, пушă эрех кĕленчисем, шăннă çăкăр таткисем çеç выртса юлнă... Кăнтăрла çитеспе сасартăк çанта-

лăк пăсăлма пуçларĕ. Çил тухрĕ, шултра нӳрĕ юр çума тытăнчĕ.

Кĕтмен çĕртех—сылтăм енчен пулемет шатăртатни илтĕнчĕ. Вăрманта вăл сасă таçта çитиех кĕрлесе кайрĕ. Унччен те пулмарĕ — сулахай флангра та çавнашкалах пулеметран темиçе черет шатăртатрĕ... Тӳрех ĕнтĕ паллă пулчĕ: тăшман таçта çывăхрах, вăрă пек пытанса выртса, засада тунă.

— Рота, развернись!—команда пачĕ командир...

Кĕçех пирĕннисем тăшмана хирĕç пеме тытăнчĕç. Кăштах перкелесен—тăшман пулемечĕсем чарăнчĕç. Рота командирĕ, пысăк йывăç кăкĕ хыçĕнчен сăнаса выртнăскер, сылтăмалла упаленсе кайрĕ...

— Старшина Кульбаченко,—терĕ вăл, пулеметран халь тесен халь çунтарма хатĕр выртакан Митяя палласа.—Икĕ отделени илĕр те, тăшман засади патне тылран пырса—тĕп тăвăр ăна! Унсăрăн пире малалла кайма хĕн пулать...

— Есть!—ответ пачĕ Митяй...

Тĕттĕмленме пуçларĕ. Икĕ отделени йывăççем хушшинелле кĕрсе курăнми пулчĕ.

Питех те вăрăмăн тăсăлчĕç минутсем... Рота командирĕ час та часах сехет çине пăхса илчĕ, Митяй халь мĕн чухлĕ шуса кайма пултарнине шутларĕ. Вăл Митяй енчен условный сигнал пуласса кĕтрĕ, анчах та минут хыççăн минут иртрĕ—сигнал çаплах пулмарĕ. Рота хăйсен юлташĕсем пирки пăшăрханма пуçларĕ: тем пулма-

рĕ-ши? Ансăртран тăшман аллине лекмерĕç-ши? Çук, ун пек пулас çук...

Темиçе разведчик политрук патне пырса, Митяй хыççăн йĕрпе каймашкăн ирĕк ыйтрĕç.

—Тăхтар-ха пăртак,—терĕ политрук, хăй те пăлханнине пытарма тăрăшса.

Тата çирĕм минут иртрĕ. Митяйран сигнал çаплах пулмарĕ.

Вара рота командирĕпе политрук Митяй çулĕпе кайма шут тытнă разведчиксене вĕрентме тытăнчĕç. Çав вăхăтра тăрук таçта малта темскер хыттăн сиксе çурăлса кайнă сасă илтĕнчĕ. Тата, тата... Виçĕ хут. Винтовкăсенчен, автоматсенчен, пулеметсенчен ним йĕркесĕр пеме тапратрĕç... Унтан каллех шăп пулчĕ.

Условный сигнал халĕ те пулмарĕ-ха. Разведчиксем мĕн чухлĕ илме май килнĕ таран патронсем, гранатăсем илчĕç те, хăйсем выртакан канавран сиксе тухса йывăç тĕмисем ăшнелле шуса кĕрсе кайрĕç. Çав самантра мал енче пит те вăйлăн шăхăрни илтĕнсе кайрĕ.

Сигнал!

Кунпа пĕрлех темсем шартлатса çурăлни, пăшал сассисем илтĕнчĕç. Рота пĕр харăс тапранса, юлташĕсене пулăшма малалла чупрĕ... Тăшмансем засадăра ларнă вырăна çитеспе, красноармеецсем хăйсен старшини, Митяй Кульбаченко, пур еннелле çерçисем пек таракан белофинсене хăйсенчĕнех туртса илнĕ пулеметран çунтарса выртнине курчĕç. Юлташĕсем ун патне пĕр аллă метр çитиччен, Митяйăн патронсем пĕтрĕç курăнать...

Ăл пулемет кутĕнчен сиксе тăчĕ те, хăйĕн икĕ енĕпе таттисĕр персе выртакан красноармеецсене аллипе сулса:

— Вперед! За родину! За Сталина!—тесе кăшкăрчĕ.

Кĕçех—тĕлĕннĕ красноармеецсем хăйсен старшини çўллĕ тенорпа юрласа янине илтрĕç:

— Это есть наш последний
И решительный бой...
С Интернационалом
Воспрянет род людской!..

— Урра-а, товарищи! Бей бандитов! Впере-ед!..

Боецсем карах тăрса, тăшмана хăвалама тытăнчĕç. Ĕнтĕ, рота пĕтĕмĕшпех малти линине тухрĕ. Таттисĕр пăшал-пулемет шатăртатрĕ, çынсем «урра» кăшкăрчĕç, çавăнтах пĕтĕм вăрман «Интернационал» кĕввипе тулчĕ.

Пуринчен малта Митяй Кульбаченко чупрĕ, пуринчен хытăрах унăн сасси янрарĕ.

...Тепĕр сехетрен Митяй рота командирне рапорт пачĕ:

— Лейтенант юлташ! Эсир хушнине пурнăçа кўртрĕмĕр. Засадăна тĕп турăмăр. Тăшманăнне икĕ пулемет, виçĕ ещĕк патрон, çирĕм граната тата пĕр офицер шинельне çавăрса илтĕмĕр. Офицерне ытла шăрăх пулнă курăнать—çарамасах тарнă. Мана панă боецсем пурте сывă.

Рота командирĕ Митяя хыттăн ыталарĕ те, тăван шăлнĕне чуптунă пекех, чуптурĕ.

Кўкеç,
январь, 1940.

# ТУПМАЛЛИ

*Стр.*

Танкист калавĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Савăнăç . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 27
Приказ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 44
Пулеметчик юрлать . . . . . . . . . . . . . . . . 55

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

22701

Редактор *Г. И. Краснов.*

Подписано к печати 29/VII—41. НТ 5701.
Тираж 3000 экз. Объем 2, 5 п/л. Заказ № 364.

Гор. Чебоксары, тип. № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР.

Цена 1 р. 60 коп

ЛЕОНИД АГАКОВ

# МОИ ДРУЗЬЯ

На чувашском языке

Госиздат ЧАССР - 1941